ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСĔМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул
Июль 7
ЫТЛАРИКУН
№ 131 (9040)
36-мĕш çул тухать.
Хакĕ 20 пус.

Паянхи номерте:

...ашни колхозникпа механизатор мала тухассишĕн кĕрешчĕр

...ян пирĕн хаçат тăванла виçĕ рес...ликăри—Мари, Мордва тата Чăваш ...публикисенчи колхоз хресченĕсем ...нче социализмла ăмăрту мĕнле пы...ăлăртса парать. Уй-хир ĕçĕсен ...е тултарнине танлаштарса пăхсан, ...курăнать: пирĕн республика чылай ...енĕпе юлса пырать.

...ĕ республикăри колхоз хресченĕсем, ...низаторсем, ялхуçалăх специалисчĕ...мăрса ĕçлесси йăлана кĕчĕ ĕнтĕ. ...ула тухăçлăхне ӳстермелли, выльăх...ăх ĕрчетмелли тата унăн тухăçлăхне ...ракан плана тултарассишĕн кĕреш...вăрăри республикăсенчен кашнинех ...тума, çапла вăра халăх валли пи...урăй апат-çимĕç, промышленность ...итĕ нумай чĕртавар хатĕрлесе ...ĕлĕшпе пысăкрах çитĕнӳсем тума ...ет. Виçĕ республика хушшинчи ...ура хамăр республикăна мала кă...тăрăшасси кашни колхозникшăн, ...заторшăн, ялхуçалăх специалисчĕ...республикăри мĕнпур ĕçсынисем...ĕ пысăк чыс пулса тăрать.

...ет Союзĕн кăнтăр енчи районĕсенче ...ырма тухрĕç. Пирĕн республикăри ...сен те çитес сывăх кунсенчех ...ĕнчи çак чи ответлă ĕçе тытăн...кулать.

...пула хăвăрт тата пĕр · тăккалама...пухса кĕртмелле. Кăçал уй-хир ĕçĕ...хатĕрхи пек вăраха тăсни, çавна ...пысăк сухатусем тунă пулмалла ...ах фактсем акă мĕн çинчен ка...чылай колхозсемпе МТС-сем тыр...пухса кĕртме халĕ те хатĕрленсе ...ла. Хĕрӳллĕ ĕçсен ответлă тапха...çитсе тăтăмăр пулин те, МТС-...ла колхозсен тырă вырмалли, авăн..., тырпула сăвăрса тасатмалли ...ĕсем хатĕр мар. Нумай колхозсен ...шукăшласа тунă ĕç планĕсем те ...

...мах комбайнсене юсас ĕç начар ... Кăçалхи сезонта кашни комбайн...тĕр тунă ĕçпе танлаштарсан, 45 ...ытларах тырă пухса кĕртмелле. ...и малтанхи кунтан пуçласа тыр...тĕмпех пухса кĕртиччен ком...пе нихçанхинчен те тухăçлăрах ...кирлине пĕлтерет. Ĕç калăпăшĕ ...й механизаторсен ответлăхĕ те ...ла пулин те хăшпĕр МТС-сен ...ителĕсем комбайнсене юсаса пĕ...засбамаççĕ-ха. Вăрмар, Куславкка, ...рмейски, Элĕк МТС-ĕсем, сăмах...мбайнсен виçĕ пайĕнчен пĕр пай...юсанă. Етĕрне, Канаш, Хĕрлĕ Тăвай, Ишлей, Вăрнар МТС-ĕсен...ç начар тăрать. Комбайнсене çак ...ех юсаса пĕтермесен, тырпула ...ĕртес тата тăкаксем пуласран ...ас ĕçре эпир пĕлтĕрхи пекех пы...мавсем умне пырса тăма пулта...

...çапмалли, тырă вырмалли ытти ...сене юсасси вара МТС-сенче чăт...япăх пырать. Колхозсенчи маши...юсас ĕç те начар. Уйрăм колхоз...итнĕ итемсем, зерносушилкăсемпе, ...складсем тăвасси, киввисене ...транспорт инвентарĕсем çинчен ...имеççĕ.

...вырма тухиччен вăхăт нумай ... Çак кунсенче ялхуçалăх маши...ĕç хатĕрĕсене юсаса пĕтерес пу...ашни колхозрах кунĕн-çĕрĕн авăн ...тырă виççе пушатма, тырпула ...а мĕн кирлине пурне те хатĕр...

...ул пухса кĕртме тата государ...тырă пама тĕплĕн хатĕрленесси ...рторганизацисен ĕçĕнче тĕп вы...шăнса тăмалла. Колхозсенче ĕç ...и пур-и, ĕç вăйне тĕрĕс вырнаç...ухнă-и, колхозницăсем—ача-пăча ...и—уй-хирте татти-сыпписĕр ĕç...татарччăр тесе яслисем тăваççĕ-и? ...хал ыйтусемпе парти тата ком...рганизацисен, парти райкомĕсен ...интересленмелле. Ялти комму...тивĕçĕ вăл тырпула хăвăрт тата ...каламасăр пухса кĕртессишĕн, ...хатĕрлемелли плана ăнăçлă тул...шĕн кĕрешме колхоз хресченĕсен, ...аторсен тата ялхуçалăх специа...н, социализмла ăмăртăвне пуçарса ...пулать.

...вырма тухиччен ялхуçалăхĕнчи ...сене туса пĕтермелле. Пуринчен ...улăх утине, нумай çул ӳсекен ку...тиштерĕ çулса пуçтарни кирлĕ. ...са кĕртмелли плана Мордва АССР ...олхозсем июнĕн 30-мĕшĕ тĕлне 63 ...тултарнă пулсан, пирĕн респуб...ра 10 процента яхăн кăна тух-

тарнă. Силос хывас тĕлĕшпе те пирĕн республика кӳршĕсенчен икĕ-виçĕ хут начартарах ĕçлет. Выльăх апачĕ хатĕрлес тĕлĕшпе нумай колхозсем пĕлтĕрхи йăнăшсенех тăваççĕ.

Колхоз хресченĕсем умĕнче çавăн пек задача тăрать: тырă вырма тухиччен утă çулса пĕтермелле, ăна капана хывмалла, государствăна утă памалли плана тултармалла тата силос хывмалли задание 80 процентран кая мар пурнăçламалла.

Выльăх-чĕрлĕх валли çурт-йĕрсем тăвас ĕçе хăвăртлатни кирлĕ. Республикăри колхозсем, пĕтĕмĕшпе илсен, витесем тумалли планăн вунă пайĕнчен пĕр пайне те тултарман. Советски, Сĕнтĕрвăрри тата ытти хăшпĕр районсенче кăçал çĕнĕрен пĕр вите те туман, киввисене те юсаман. Чылай колхозсенче фермăри ĕçсене механизацилес тĕлĕшпе халĕ нимĕн те тумаççĕ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тата унăн тухăçлăхне ӳстерес ĕçе хакламан пирки çавăн пек пулса пырать ĕнтĕ. Ку пысăк çитменлĕхе малашне чăтса пурăнма çук. Выльăха хĕл каçа утă тата ăшă витесенче усрама хатĕрленесси—паян тумалли ĕç. Кам ăна хакламасть, вăл государствăшăн питĕ кирлĕ ĕçе çав тери пысăк сиен кӳрет.

Çурт-йĕрсене, техникăлла культурăсене, пахча çимĕçсене пăхса ӳстерес, тырпула, çĕртме сухи пуссисене çум-курăксенчен тасатса тытас ĕçсем енĕпе те пирĕн республика кӳршĕсенчен юлса пырать. Чылай колхозсен уй-хирĕсене çумкурăк пусса илнĕ пулин те, вĕсене çумласа тасатас тĕлĕшпе кирлĕ пек тăрăшмасть, çавăн пирки çурт-йĕрсен тата хаяр пусакан ытти культурăсен тухăçлăхĕ чакма пултарни çинчен манаççĕ.

Ялхуçалăх органĕсем умĕнче пысăк задачăсем тăраççĕ. Ялхуçалăх тата Хатĕрлев министерствисене пĕрлештерсе пĕр министерство тунă май тырпул акса тăвас тата тырпул хатĕрлес ĕçе оперативлăрах ертсе пыма лайăх майсем пулса тăчĕç. Ялхуçалăхпа хатĕрлев министерстви тырпул вырса пухас тата тырă хатĕрлес ĕçсене тачă çыхăнтарса туса пыма тивĕç. Тырă вырма тухсанах государствăна тырă пама тытăнасси тĕп задача пулса тăрать. Хатĕрлев пункчĕсен кунĕн-çĕрĕн тырă йышăнма мĕн кирлине халех туса çитермелле.

Итемсем çинче ĕçе тĕрĕс йĕркелесси çине уйрăмах тимлĕ пăхас пулать. Кунти ĕçсене май килнĕ таран пĕтĕмпех механизацилемелле. Комбайнсен, молотилкăсен, тырă тасатмалли машинăсен ĕçне тĕрĕс çыхăнтарса йĕркелес пулать. Çапнă тырра итем çинче вырттармалла мар, ăна çийĕнчех тасатса тата виççе турттарса кĕртмелле, складсене хумалла. Тырă турттармалли хатĕрсем çителĕклĕ пулмалла. Транспорт бригадисенче ĕçлеме харсăр та пĕтĕм ĕçе чĕререн парăнса тăвакан колхозниксене уйăрмалла.

Хальхи вăхăтра политикăлла-массăлла ĕçе нихçанхинчен те çӳлĕрех пусăма çĕклени кирлĕ. Агитаторсен колхозниксем ĕçленĕ çĕрте пулмалла. Агитациллемассăлла ĕçе тырпула пухса кĕртме тĕплĕн хатĕрленес ĕçпе тачă çыхăнтарса пымалла. Агитаторсен колхоз, уй-хир бригади, комбайн агрегачĕ, кашни колхозникпа механизатор умĕнче тăракан задачăсем çинчен ăнлантарса памалла. Кам ĕçре паян палăрчĕ, кам ĕç нормине тултараймарĕ, мĕншĕн вăл ыттисенчен кая юлчĕ? Çакнашкал ыйтусем час-часах тухса тăраççĕ колхозниксем умне. Агитаторсен çав ыйтусем çине ĕçе тĕплĕн пĕлнипе конкретлăн ăнлантарса памалла.

Пирĕн республика делегацийĕ Мари республикинчи колхозсенче ĕçсем мĕнле тăнине паллашма тухса кайрĕ. Кӳршĕри республикăри колхозсен çитĕнĕвĕсемпе, ĕç опычĕпе паллашни пире пысăк усă парĕ. Республикăри районсемпе колхозсем тата МТС-сем социализмла ăмăрту договорĕсене мĕнле пурнăçланине тĕрĕслес ĕçе йĕркелени те халĕ питĕ вырăнлă пулнă пулĕччĕ. Парти райкомĕсен, пуçламăш парторганизацисен колхоз хресченĕсен социализмла ăмăртăвне ертсе пырас ĕçри формализма халех пĕтерес пулать. Колхозниксен, механизаторсен тата ялхуçалăх специалисчĕсен ăмăртăвне конкретлă тата оперативлă ертсе пырсан кăна ĕçре пысăк çитĕнӳсем тума пулать. Социализмла ăмăртăва ялхуçалăх ĕçченĕсене массăллăн хутшăнтарни кирлĕ. Кашни колхозникпа механизатор виçĕ республика хушшинчи социализмла ăмăртура мала тухассишĕн пĕтĕм вăй-хăвата парса ĕçлетĕр.

Тăван çĕршывра

Колхозсем пĕрлешсе тунă çĕнĕ гидроэлектростанци

ПОЛТАВА, июлĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Çĕнĕ Сенжар районĕнчи колхозниксем Ворскла юханшывĕ çинче Кунцево ялĕнче çĕнĕ гидроэлектростанцие ĕçе янă.

Çĕнĕ гидроэлектростанци 420 киловатт вăйпа ĕçлет. Ăна пĕрлешнĕ 5 колхоз пуçарнипе тунă. Электростанци 19 яла çутă парса тăрать. Кăç пулсан клубсемпе библиотекăсенче, колхозниксен килĕсенче, урамсем хушшинче, фермăсенче пиншер электролампа çутатма пуçлавĕ.

Çĕнĕ электростанци колхозниксен пурнăçĕнче пысăк улшăну тăвать. Электроэнерги пулăшнипе уй-хир ĕçĕсемпе выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçсене механизацилесçĕ. Фермăсемпе ытти производствăлла участоксенче халех 50 электромотор ĕçлеме пуçланă. Хăшпĕр колхозсенче итем çинчи ĕçсене пĕтĕмпех механизацилесçĕ.

Кунцеври электростанци вăл—облаçри колхозсем вăрçă хыççăнхи çулсенче туса лартнă 18-мĕш электростанци. Кăçалхи çул вĕçленнĕ тĕле Псел юханшывĕ çинче колхозниксем пĕрлешсе тата виçĕ гидростанци туса лартаççĕ.

МАРКСИЗМ-ЛЕНИНИЗМАН КАÇХИ УНИВЕРСИТЕЧĔСЕНЧЕ

ТАШКЕНТ. Ташкент хулинчи марксизм-ленинизмăн каçхи университетĕнче тата унăн 12 филиалĕнче экзаменсем пулса иртнĕ. Университетран 1.040 çын вĕренсе тухнă. Вĕсем хушшинче партипе совет работникĕсем, врачсем, педагогсем, наукăпа искусство деятелĕсем нумай.

ДЗАУДЖИКАУ. КПСС Дзауджикау хула комитечĕ çумĕнчи марксизм-ленинизмăн каçхи университетĕнчен 200 çын ытла вĕренсе тухнă. Кăçал университетран нихăш çулничен те ытларах вĕрентсе кăларнă. (ТАСС).

Мускав. Ленинские горы. Государство университечĕн çӳлĕ çурчĕ.
Н. ГРАНОВСКИЙ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Мускавра Пĕтĕм тĕнчери кооперации кунне палăртни

Июлĕн 4-мĕшĕнче Мускавра Пĕтĕм тĕнчери кооперации кунĕ ячĕпе потребительсен кооперацийĕнче ĕçлекен работниксен активĕн савăнăçлă пухăвĕ пулнă.

Пухура Центросоюз правленийĕн председателĕ И. С. Хохлов доклад тунă.

Совет Союзĕнчи потребительсен кооперацийĕ, терĕ Хохлов юлташ, Пĕтĕм тĕнчери кооперации кунне çĕнĕ çитĕнӳсемпе кĕтсе илет. Потребительсен кооперацийĕн организацийĕсем хăйсен ĕçне çултан-çул вăйлатса пыраççĕ, хуçалăхла финанс ĕçне лайăхлатаççĕ. Потребительсен кооперацийĕн ĕçне аталантарас тĕлĕшпе Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕпе Совет Правительстви пысăк пулăшу параççĕ.

Çĕршыври кооператорсем умĕнче пысăк задачăсем тăраççĕ: тавар çаврăнăшне малалла вăйлатса пымалла, совет суту-илĕвне çĕнĕ, тата çӳлерех пусăма çĕклемелле.

Докладчик малалла совет кооперацийĕн представителĕсем Пĕтĕм тĕнчери кооперации альянсĕнче пысăк ĕç туса иртернине палăртнă. Вĕсем альянс уставĕ тăрăх тĕрлĕ çĕршывсенчи кооперации организацийĕсем хушшинчи экономикăлла çыхăнусене тĕреклетес тата вăйлатас тĕлĕшпе, кооперации организацийĕсене пĕтĕм тĕнчери мир ĕçне тĕреклетес ĕçе хутшăнтарас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса иртереççĕ.

Савăнăçлă пуху пулнă хыççăн концерт пулнă. (ТАСС).

Студентсен Пĕтĕм Союзри çиччĕмĕш спартакиади

Июлĕн 5-мĕшĕнче Мускавра, «Динамо» стадионĕнче, аслă шкулсенче вĕренекен студентсен Пĕтĕм союзри çиччĕмĕш спартакиади уçăлнă. Спартакиадăна СССР Культура министерствин «Наука» спорт обществин Центральнăй Совечĕ организациленĕ. Ăмăртăва Мускаври, Ленинградри, Киеври, Минскри, Ригăри, Грознăйри, Тартури тата ытти хуласенчи аслă шкулсенче вĕренекен 1.400 ытла студент хутшăнать.

СССР Культура министрĕн заместителĕ С. В. Кафтанов тата ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕн секретарĕ Р. Т. Аблова спортсменсене саламласа сăмах каланă. Вĕсем спартакиадăна хутшăннă студентсене вĕренӳ çулне ăнăçлă вĕçленĕ ятпа саламланă тата ăмăртура çитĕнӳсем тума ырă сунна.

Парад хыççăн çăмăл атлетсен вăйăи пуçланнă. 100 метр чупмалли ăмăртура Ленинградри В. И. Ульянов (Ленин) ячĕпе тăракан электротехника институтĕнчи аспирант Ф. Голубев лайăх тĕслĕх кăтартнă. Вăл çак дистанцие 10,8 секундра чупса тухнă. Хĕрарăмсем хушшинчи ăмăртура 100 метр чупса Киеври Т. Г. Шевченко ячĕпе тăракан государство университетĕнче вĕренекен студентка О. Кошелева малти вырăна тухнă. Вăл çак дистанцие 12.3 секундра чупса тухнă. 400+300+200+100 метр чупса Мускав команди мала тухнă.

400 метра барьерсем урлă каçса чупмалли ăмăртура Мускаври Бауман ячĕпе тăракан аслă техника училищинче вĕренекен студент Н. Терешин малти вырăна тухнă. Вăл çак дистанцие 55,8 секундра чупса тухнă.

Инçете сикес тĕлĕшпе те ăмăртусем вăйлă пулнă. Грозный хулинче вĕренекен студентка Пуревич 5 метр та 49 сантиметр таран сикнĕ.

Студентсен Пĕтĕм Союзри спартакиади темиçе куна пырать.

Государствăна—тырă

КАРШИ, июлĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Кашка-Дарья облаçĕнче тĕштырăсене виççĕмĕш пайĕ чухлĕ пухса кĕртнĕ. Бешкент тата Камаши районĕсенче кĕрхипе çурхи урпана график тăрăх палăртнинчен 15 кун маларах пухса кĕртнĕ.

Кăçал, иртнĕ çулхи çак вăхăтрипе танлаштарсан, государствăна вуншар пин тонна тырă ытларах панă.

Çĕнĕ шкулсем

ОРЕЛ, июлĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Облаçри хуласемпе ялсенче шкул çурчĕсем тăвас ĕç анлăн сарăлнă. Орел хулинче 440 ача вĕренмелĕх çĕнĕ шкул туса лартнă. Çавăн пекех çамрăк рабочисен шкулне туса пĕтереççĕ.

1953—1954 вĕренӳ çулĕнче ялти тата хулари çамрăксем валли çĕнĕрен 15 шкул ытла уçăлать.

Вăрçă хыççăнхи çулсенче Орел облаçĕнче шкул çурчĕсем 600 ытла туса лартнă.

Тепĕр хут вăрмансем лартса ӳстереççĕ

ВЕСЕЛОВСКИЙ (Ленинград облаçĕ), июлĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче районти вăрмансем пысăк сиен курнă. Веселовский вăрман хуçалăхĕ çак вырăнсенче çĕнĕрен вăрмансем лартса ӳстерес тесе сахал мар вăй хунă. Кашни лесничествăра çамрăк йывăççем çитĕнтерме питомниксем уçнă. Рабочисен бригадисем 3 пин гектар çĕр лаптăкне тасатса туса çамрăк йывăççем лартса хăварнă.

Йывăççем лартнипе пĕрлех вăрмансенче усăллăрах йывăççем çитĕнтермелле тăвас тĕлĕшпе те пысăк ĕçсем иртереççĕ.

Хальхи вăхăтра вăрман çитĕнтермелли пĕтĕм çĕр лаптăкĕ çине йывăç лартса çитернĕ. Ленинград патĕнче халĕ çамрăк вăрмансем çитĕнеççĕ. Вĕсем—ĕçсыннисен канмалли юратнă вырăнĕ пулса тăраççĕ.

Ленинград облаçĕнчи ытти районсенче те çĕнĕрен вăрмансем лартса ӳстереççĕ.

Экскаваторщиксем çĕнĕ каналсем алтаççĕ

БУХАРА, июлĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Бухара облаçĕнче халиччен усă курмасăр выртнă çĕрсене тырпул акса илме юрăхлă тăвас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса иртереççĕ. Мĕнпур ĕçсене механизмсемпе тăваççĕ.

Кăçал çак ĕçсене туса тăма Бакентра машина-экскаватор станцийĕ уçнă. Экскаваторщиксем çĕнĕ коллектор (канал) хываççĕ. Вăл çĕр айĕнчи шывсене юхтарса ярассине хăвăртлатма, тăварлă çĕре тасатма пулăшать. Çитес çулхи çуркунне çавăн пек хатĕрлесе çитернĕ çĕрсем çинче çĕр мамăкĕ акса тума тытăнаççĕ.

Кивĕ каналсене тасатас тата çĕнĕ каналсем тăвас тĕлĕшпе кăçал пĕлтĕрхинчен икĕ хут ытларах механизмсем ĕçлеççĕ.

Скумбри тытаççĕ

ОДЕССА, июлĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Одесса сыранĕсем патне скумбри пулă йышлăн пырса тухнă. Çак пахал пулла Одесса, Николаев, Херсон, Измаил, Крым облаçĕсенчи колхозсем тытаççĕ.

Одесса облаçĕнчи Каганович районĕнчи «Червона хвиля» колхозри Захарий Брамарецкий ертсе пыракан бригада пĕрре сĕрсе 55 центнер скумбри тытнă. Ытти чылай бригадăсем те пулă ăнăçлă тытаççĕ. Одессăри рыбакколхозсоюз скумбри тытмалли çур çуллăк планне 150 процент тултарнă.

Çул-йĕр тăвас ĕçе хăвăртлатар

Шупашкар, Сĕнтĕрвăрри, Тăвай, Шăхасан, Муркаш тата Чкаловски районĕсенчи колхозниксемпе çул-йĕр работникĕсем строительство планне срокчен, пур ĕçе те пысăк пахалăхпа тума пулса йышăннă социализмла обязательствăна чыслăн пурнăçлаççĕ. Шăхасан районĕнче чул сарса 2,35 километр тăршшĕ, Сĕнтĕрвăрри районĕнче 1,7 километр, Муркаш районĕнче 1,5 километр тăршшĕ паха çул тунă. Уйрăм районсенче çĕнĕ кĕпер тăвас, киввисене юсас, çĕр чавса купалас ĕç те ăнăçлă пулса пырать.

Малта пыракансен опычĕнчен çакă уççăн курăнать: кашни районăн, ял Совечĕн, колхозăн государство çирĕплетсе панă плана срокчен тултарма мĕн кирли пурте çителĕклĕ. Ĕç ăнăçлăхне колхозниксем хушшинче массăлла-агитациллĕ ĕçе, социализмла ăмăртăва анлăн сарни татса парать.

Нумай районсенчи çул-йĕр работникĕсем тата райсовет исполкомĕсем колхозниксен валли тухăçлă ĕçлеме паха майсем туса памаççĕ. Красноармейски, Йĕпреç, Етĕрне, Кувакино районĕсем çулсерен юлса пыраççĕ, кăçал та республикăна каялла туртаççĕ.

Шăмăршăпа Патăрьел хушшинчи çул япăххи халăх хуçалăхне пысăк сиен кӳнине Шăмăршă çул-йĕр пайĕн заведующийĕ Пименов юлташпа райисполком председателĕ Васильев юлташ лайăх пĕлеççĕ. Кӳ çул тăрăх Канаша тата Ульяновск хулине куллен чылай автомашинăсем тата лавсем çӳреççĕ. Уйрăмах государствăна тырă панă вăхăтра çак çулăн пĕлтерĕшĕ ӳсет. Кăçалхи план тăрăх районăн машинăсемпе çӳреме чи кансĕр вырăнта чул сармалла. Ку ĕçе пуçăнман та. Сывăхра чул çук,—теççĕ район руководителĕсем. Чăн та, кунта чул хатĕрлесе турттарма çăмăлах мар. Анчах кĕпер тума мĕн чăрмантарать-ши вара района? План тăрăх 120 метр тăршшĕ кĕпер тумалла пулсан, 24 метр тăршшĕ çеç тунă. Çав вăхăтрах вăрмантан аякра вырнаçнă Шупашкар районĕ 121 метр, Тăвай районĕ 127 метр тăршшĕ, урăхла каласан, Шăмăршă районĕнчен пилĕк хут ытларах кĕпер тунă.

Хăшпĕр çул-йĕр пайĕсем тата çул участокĕсен руководителĕсем плана хисеп енчен ытларах тултарассишĕн çеç кĕрешеççĕ, çулсемпе кĕперсене пысăк пахалăхпа тăвассине е юсассине кирлĕ пек хакламаççĕ. Çак сиенлĕ практикăна пĕтерес пулать. Пиншер колхозник тăрăшса ĕçлени харама ан кайтăр тесен пур ĕçе те лайăх, проектра кăтартнă пек тумалла.

Тепĕр пысăк çитменлĕх вăл—тума тытăннă ĕçе вĕçне çитерменни. Час-часах çакна курма пулать: юсама палăртнă чул сарнă çул участокне е кĕпере çӳтсе тăкаççĕ те, эрни-эрнипе е уйăхĕ-уйăхĕпе юсамасăр вырттараççĕ. Çумăр çума тытăнсан унта машинăпа мар, лавпа та пырса кĕме май çук.

Ишлей районĕнчи ĕçсыннисем нумайранпа Ишлейпе Шупашкар хушшинче паха çул тăвассишĕн кĕрешеççĕ, автомашинăсем столицăна хĕлĕн-çăвĕн çӳресе тимлĕн кĕтеççĕ. Вĕсен ĕмĕчĕсем пурнăçа кĕресси кус умĕнчех: тата 250 метр тăршшĕ çул çине чул сарасси çеç юлнă. Анчах ăна пурнăçлама çул хĕрринче чулпа хăйăр çук. Çавăн пекех тата 550 метр тăршшĕ чул сарсан Етĕрнепе Советски хушшинче те машинăсемпе çӳремелли паха çул пулать. Шупашкар районĕнче çул çине чул сарса пĕтермен.

Пирĕн шухăшпа, çав туса çитерейменшĕн участоксене кирек мĕнле пулсан та çапла хăварма юрамасть.

Элĕк, Етĕрне, Хĕрлĕ Чутай тата Çĕрпӳ районĕсенче чула лайăх пусарман, хăйăр сахал сапнă çулсем пур. Автомашинăсем çӳрес-тăвас пулсан çав çулсем пĕр самантра пăсăлмă, çĕршер çын ĕçĕ харама кайма пултарать. Çул-йĕр пайĕсен çавăн пек участоксенчи çула хăвăртрах туса çитерме тăрăшас пулать.

Партипе правительство çул-йĕр ĕçне механизацилеме тăрăшаççĕ. Машинăсемпе çул тăвакан станци (МДС) çулсерен пысăк ĕç тăвать. Вăл кăçал чул сарса 4,2 километр тăршшĕ çĕнĕ çул турĕ, ахаль çулсене чылай юсарĕ. Механизаторсен пуçарулăхĕпе пултарулăхĕ пысăк, вĕсем паха çул тăвассишĕн вăя шеллемесĕр кĕрешеççĕ. Вĕсем хăватлă техникăна татти-сыпписĕр ĕçлеттересси çул-йĕр пайĕсемпе райисполкомсенчен те сахал мар килет. План тăрăх Сĕмĕрле районĕнчи колхозсен Хĕрлĕ Чутайпа Парачкав хушшинчи çул çине хăйăр чылай турттарса кăлармалла тата çĕр чавса купаламалла. Район хăйне çирĕплетсе панă заданне пурнăçласан МДС Саланчăк вăрманĕнче тата Подборнăй ялĕ патĕнче пурĕ 4,4 километр тăршшĕ çĕнĕ çул тума пултарать. Сĕмĕрле çул-йĕр пайĕн заведующийĕ Дмитриев юлташпа райисполком председателĕ Статуев юлташ пур ĕçе те МДС тăвасса шанса тăраççĕ, хăйсен тивĕçне пурнăçлама колхозниксене мобилизацилемеççĕ. Çавăн пекех МДС механизмсемпе туллин усă кураймасть, плана вăхăтра тултараймасть.

МДС-а пĕр районшăн çеç организацилемен тата ăна организацилени уйрăм районсенчи вăйпитти колхозниксене çулйĕр строительствине хутшăнтарассинчен хăтармаллине пĕлтермест. Çул-йĕр пайĕпе райисполкомăн государство çирĕплетсе панă плана тултарма тивĕçлĕ мерăсем йышăнас пулать.

Июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне республика çĕнĕ çулсем тумалли тата киввисене тĕпрен юсамалли çулталăкри плана 52 процент тултарчĕ, çапла вара ВЦСПС-па Главдорупр облаçсемпе автономиллĕ республикăсем, çул-йĕр строительстви тĕлĕшпе ăмăртса ĕçлемелли условисенчен пĕр пайне пурнăçларĕ. Çав условисем тăрăх июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне çĕнĕ çулсем тумалли тата киввисене тĕпрен юсамалли çулталăкри плана 50 процентран кая мар тултармалла. Анчах пирĕн республика кĕперсемпе трубасем çĕнĕрен тумалли тата киввисене тĕпрен юсамалли плана 7 процент вырăнне 53 процент çеç тултарнипе ăмăрту условийĕсене пурнăçламарĕ. Пирĕн çак çитменлĕхе пĕтерме, тăванла республикăсем хушшинче пыракан ăмăртура малти вырăна тухма мĕн кирли пурте çителĕклĕ.

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ КПСС обкомĕ республика территорийĕнчи çулсемпе кĕперсене пурне те июнĕн 15-мĕшĕччен юсаса çитерме хушрĕ. Юлашки кунсенче нумай районсем, уйрăмах, юлса пыраканнисем, ĕçе хăвăртлатасшăн чакарчĕç, çул çинче çуррансем, уйрăмах лавсемпе автомашинăсем сахал.

Хăшпĕр районсенче глубиннăй пункчĕсем, итемсем, армансем тата складсем патне пыракан çулсене юсамаççĕ, урăхла каласан, çĕнĕ тырă татти-сыпписĕр турттарма паха майсем тумаççĕ. Çак çитменлĕхе пур çĕрте те пĕтермелле.

Тырă вырма тухиччен вăхăт нумай юлмарĕ. Плана тултарман районсен ĕçе хăвăртлăхне ик-виç хут ӳстермелле. Çулйĕр пайĕсемпе райисполкомĕсен ... Совечĕпе колхоза график ... памалла, ăна пурнăçланине ... тĕрĕслемелле. Уйрăмах предприятисене организацисен автомашинисемпе ... турттарас ĕçе вăйлатмалла.

П. [illegible]

Шăваракан çĕр участокĕсем çинчен 40-шер центнер тулă туса илнĕ

...ВСКАЯ (Ростов облаçĕ), июлĕн ... (ТАСС). Районти колхозсем шăваракан çĕр участокĕсем çинчен пысăк тырпул туса илеççĕ. «День ...» колхоз начар çĕр участокĕсем ...те гектар пуçне 17-шер центнер ...са илет. Тисмĕс нумай тăккă тата ... çĕр çинчен колхозсем гектар пуçне 25—30 центнер таран тырă туса илеççĕ.

Шăваракан çĕр участокĕсем çинче вăрлăх çитĕнтерекен совхоз пысăк тухăçлă тырпул пăхса ӳстернĕ. 825 гектар çинчен вăтам шутпа гектар пуçне 40-шер центнер тулă тухать.

ТĂВАНЛА РЕСПУБЛИКĂСЕН ĂМĂРТĂВĔНЧЕ МАЛА ТУХАССИ— ЯЛХУÇАЛĂХ ĔÇЧЕНĔСЕН ТИВĔÇĔ

* * *

Ăмăртакан республикăсенче

Колхозсенче МТС-сем ялхуçалăх ĕçсен планне июнĕн 30-мĕшĕ тĕлне тултарнă (процентпа)

	Мордва АССР-ĕ	Мари АССР-ĕ	Чăваш АССР-ĕ
Пĕтĕмĕ çумкурăксенчен тасатнă	—	37,6	36,1
Пахча çимĕçсене çумкурăксенчен тасатнă	—	37,7	57,4
Çĕрулми купаланă	45,0	34,4	71,0
Махорка акнă лаптăка кăпкалатнă	27,0	—	26,9
Тымарçимĕçсем акнă лаптăка кăпкалатнă	21,3	11,4	35,8
Улăх утти çулнă	40,7	28,8	14,8
Акнă курăксем çулнă	7,8	6,4	10,3
Силос хывнă	17,5	15,8	2,9
Комбайнсем юсанă	56,4	77,1	58,2
Молотилкăсем юсанă	14,1	18,6	28,2
Сенокосилкăсем юсанă	106,5	90,2	100,8
Жаткăсем юсанă	18,6	33,4	27,3
Силосорезкăсем юсанă	121,0	103,7	82,2
Тракторсемпе тумалли ĕçсен çулталăкри планне тултарнă	41,2	37,2	38,1
Çĕртме сухине çемçетнĕ	51,4	25,5	17,7
Утă çулнă	63,0	7,7	9,6
15 лаша вăйлă кашни тракторпа ĕçленĕ (гектарпа)	210,0	167,2	187,4

Тăккаламасăр пухса кĕртмелле

Пирĕн колхоз уй-хирĕсенче кăçал та, иртнĕ çулхи пекех, вăйлă тырпул çитĕнет. Ун çине пăхса колхозниксем тивĕçлипех савăнаççĕ.

Тырпул пухса кĕртес вăхăт нумаях та юлмарĕ. «Тырпул пухса кĕртесси—вăхăтра тумалли ĕç,—тенĕ И. В. Сталин,—вăл кĕтсе тăма юратмасть. Вăхăтра пухса кĕртрĕн—тырăллă пултăн, кая юлтăн—çухатрăн». Çак сăмахсене пирĕн колхоз членĕсем яланах асра тытаççĕ.

Хальхи вăхăтра вĕсен пурнăçĕнче тырпула хăвăрт тата пĕр тăкаксăр пухса кĕртме хатĕрленесси тĕп вырăн йышăнса тăрать.

Пирĕн колхозăн кăçал 473 гектар çинчи тырпула пухса кĕртмелле, вăл шутран: ыраш 184,5 гектар, кĕрхи тулă 20 гектар, суртырисем 268,5 гектар. Кунсăр пуçне хантăр 30 гектар, пахча çимĕçсемпе çĕрулми 56 гектар, тĕрлĕ культурăсем 257,6 гектар çинчен пухса кĕртмелле. Вăл шутран: пĕр çул ӳсекен курăксем 38 гектар, нумай çул ӳсекен курăксем 201 гектар, вырăн кăшманĕ 10 гектар, силос культурисем 7 гектар ытларах, выльăхсене çитерме симĕс ыраш 20 гектар. Çавăн пекех колхозăн кăçал 70 гектар çинчи çарон утине, 260 гектар çинчи выльăх апачĕлĕх акнă курăксене пухса кĕртмелле.

Тырпула пухса кĕртнĕ тата государствăна тырă панă вăхăтра пĕтĕм ĕçе ăнăçлă йĕркелесе пырас тесе эпир ĕç планĕ турăмăр. Ăна малтан колхоз правленийĕн ларăвĕнче, кайран колхозниксен пĕрлехи пухăвĕнче пăхса тухса çирĕплетрĕмĕр. Çак ĕç планне кашни бригадăра тĕплĕн сӳтсе явса унпа колхозниксене паллаштартăмăр. Çапла вара, тырпула пухса кĕртнĕ вăхăтра кашни колхозник хăй ăçта ĕçлемеллине, мĕнле ĕç тумаллине халех лайăх пĕлсе тăрать.

Тырпул пухса кĕртме тата çав вăхăтри ытти ĕçсене тума эпир хамăрăн вăйсене тĕплĕн шута илсе валеçсе тухрăмăр. Тырпул пухса кĕртес ĕçе пирĕн тăватă уй-хир бригадинчен пурĕ 401 колхозник хутшăнать. Çак ĕçе колхозри выльăх апачĕ хатĕрлекен тата пахча çимĕç туса илекен бригадăсенчи хăшпĕр колхозниксем те хутшăнаççĕ.

Тырпул пухса кĕртме тата çав вăхăтри ĕçсене тума пирĕн колхозăн туртăм вăйĕпе ĕç хатĕрĕсем çителĕклĕ. Тырпул пухса кĕртнĕ вăхăтра Сĕнтĕр МТС-ĕн пĕр самоходнăй комбайнĕ ĕçлет. Унпа хамăр колхоз членĕсем, иртнĕ çул МТС-ра комбайнерсен курсĕнче вĕреннĕ Калиновна Волков комбайнерсем ĕçлеççĕ. Договор тăрăх комбайнпа 70 гектар çурхи тулă, 30 гектар сĕлĕ тата 50 гектар нумай çул ӳсекен курăк (вăрлăхлăх клевер) пухса кĕртмелле. Комбайнпа ĕçлеме чи лайăх тӳрем участоксене уйăртăмăр, комбайнерпа пĕрле маршрутсене палăртрăмăр. Комбайн патĕнче ĕçлеме 10 колхозник уйăрнă, шыв, туртăм кашни бригадăран пĕрер лаша, тырă тата улăм турттарма виçĕ лаша уйăрнă. Колхозăн 6 жнейка пур. Вĕсенчен иккĕшĕ пайнхи кунах юсавлă, тăваттăшне çак кунсенчех МТС-ра юсаса пĕтереççĕ. Жнейкăсемпе ĕçлеме колхозри чи пултаруллă, техникăна лайăх пĕлекен çамрăксене—А. Иванов, Г. Иванщиков, Г. Пуянов, В. Горланов, С. Ильмендеров юлташсене уйăртăмăр. Жнейкăсемпе икĕ смена ĕçлемелле пулать, кашни машинистăн помощник пур.

Жнейкăсемпе ĕçлеме 24 лаша уйăртăмăр. Смена вăхăчĕ çитсен конюхсем лашасене ун илсе тухаççĕ, машинăсене нумай вăхăт чарса тăмасăрах лашасене улăштараççĕ. Çапла туни ĕç тухăçлăхне ӳстерме, нормăна иртерсе тултарма, тырпула кĕске срокра вырса пĕтерме май парать.

[illegible]

не МТС-ра юсаççĕ. Çичĕ молотилкăран виççĕшĕ электричество вăйĕпе ĕçлеççĕ. Авăн çапма кашни бригадăран 24-шар çын уйăртăмăр. Молотилкăсен барабанщикĕсем пулса Г. Котлов, Г. Пуянов, П. Ельмешкин тата С. Серов колхозниксем ĕçлеççĕ. Авăн çапассине эпир пилĕк витнĕ итем çинче организацилетпĕр. Пушартан сыхланас тесе итемсем çинче шыв пичкисем тата пожарнăй насуссем пулаççĕ. Кашни итем çинче пĕр весовщик пулать. Сортласа тасатнă тырра Ф. Олангин, Н. Краснов тата К. Яранцева кладовщиксем йышăнса тăраççĕ. Нӳрлĕх енчен кондицие ларман тырра типĕтме пирĕн икĕ зерносушилка (ПЗС-3) пур. Вĕсем валли вутă-шанкă çителĕклĕ хатĕрлесе хутăмăр.

Вăрлăх участокĕсенчен пухса илнĕ тырра сыхласа усрама колхозăн 900 тонна вырнаçакан типовой складсем пур. Вĕсене эпир тахçанах дезинфекцилесе тасатрăмăр, илеçне шурăтрăмăр.

Тырпул пухса кĕртнĕ вăхăтра кирлĕ пулакан хатĕрсене—кĕрепплесем, сенĕксем, сăртлă вырăнсенчи тырра вырма çурласем, кĕреçесем, шăпăрсем, михĕсем, шĕналăвсем тата ытти те çителĕклĕ хатĕрлерĕмĕр.

Малтанхи чи лайăх тырра колхоз государствăна парать. Тырă турттарма эпир ятарласа икĕ машинăран икĕ транспорт бригади турăмăр. Вĕсене А. Васильев комсомолец тата колхозри çамрăк С. Юлин ертсе пыраççĕ. Кашни бригадăра тырă тиесе пушатма тиевçисем уйăрнă. Икĕ машини валли те брезентсем пур. Машинăсем, кашни кун хатĕрлев пунктне виççĕр хутласа, кунне 14-шар тонна таран государствăна тырă леçеççĕ. Çапла вара эпир государство умĕнчи обязательствăна сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпех пурнăçлатпăр.

Кăçал кĕрхи культурăсене уллă кунта, çурхи культурăсене 12 кунта пухса кĕртетпĕр. Техникăлла тата выльăх-чĕрлĕх апачĕлĕх акнă культурăсене сентябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне пухса тирпейлетпĕр.

Тырпул пулса çитнине тăтăшах сăнаса тăма виçĕ контрольнăй пост организацилерĕмĕр. Тырпул пухса кĕртнĕ вăхăтра кашни колхозник уйрăм сдельщина йĕркипе ĕçлет. Халĕ пирĕн колхозниксем ĕç нормине лайăх пĕлсе тăраççĕ.

Колхоз правленийĕ пĕтĕм ĕçе колхозри парторганизаципе тачăн çыхăнса туса пырать. Пирĕн колхозра халĕ 22 коммунист, вĕсенчен нумайăшĕ колхозри ответлă вырăнсенче ĕçлеççĕ.

Культурăлла-массăлла ĕçе колхозри агитколлектив туса пырать. Агитколлектив 23 çынтан тăрать. Ăна колхозри партбюро секретарĕ В. Максимов юлташ ертсе пырать. Агитколлективра 15 коммунист, 5 комсомолец тата 3 учитель. Агитаторсене бригадăсем çумне çирĕплетсе тухнă. Вĕсем колхозниксене хаçат-журналсем вулаоа параççĕ, çĕнĕ кăларсене çийĕнчех пĕлтерсе тăраççĕ. Колхоз бригадăсем валли 50 хаçат-журналсем илсе тăрать.

Тырпул пухса кĕртнĕ вăхăтра кашни бригадăрах витрина тата Хисеп хăми пулать, ялти библиотека куçса çӳрекен библиотека организацилет. Социализмла ăмăртура малти вырăна тухакан бригадăна пама колхозăн Хĕрлĕ ялав пур. Халĕ колхозра «Çĕнĕ пурнăçшăн» ятлă стена хаçачĕ уйăхра икĕ хут кăлараççĕ. Кунсăр пуçне уй-хирти ĕçсем пуçлансан кашни бригадăрах «Боевой листоксем» виçĕ кунта пĕрре тухмалла. Вĕсен редакторĕсене çирĕплетнĕ. Эрнере пĕрре колхозниксене кино кăтартатпăр. Колхозри çамрăксен художествăлла пултаруллăх коллективĕ концертсем, спектакльсем лартса парать.

Пирĕн колхоз хамăр районти Лысенко ячĕллĕ [illegible] тата «Новая Югга» колхозсемпе, Мари АССР-ĕнчи Еласовски районĕнчи «Сила» колхозпа ăмăртса ĕçлет.

[illegible]

М. [illegible]

Вăйлă тырпул çитĕнет

Пирĕн «Красный флот» колхоз 1951 çулта «Красный дол» тата «Красная заря» колхозсемпе пĕрлешсе пысăкланнă. Колхозсене пĕрлештерни артель хуçалăхне малалла аталантарма, пысăк тухăçлă тырпул туса илме, обществăлла выльăх-чĕрлĕх йышне тата тухăçлăхне ӳстерме лайăх майсем туса пачĕ.

Вăйлă тырпулшăн эпир Молотов ячĕпе тăракан колхозпа ăмăртса ĕçлетпĕр. Колхоз ĕçченĕсем социализмла ăмăртура малти вырăна тухассишĕн ырми-канми тăрăшса ĕçлеççĕ.

Çураkине эпир кĕске срокра тата агротехника кăтартăвĕсене тĕрĕс пурнăçласа ирттертĕмĕр. Çак ĕçре пире МТС механизаторĕсем пысăк пулăшу пачĕç. Пĕрчĕллĕ культурăсене 8 кун хушшинче акса хăвартăмăр. Колхозниксем тăрăшса ĕçлени сая каймарĕ. Уй-хирте вăйлă тырпул çитĕнет. Ку вăл—хастарлă та чыслă ĕçĕн результачĕ. Мĕншĕн ялхуçалăх ĕçĕсене эпир план тăрăх туса пыратпăр, планра кăтартнă ĕçсене çине тăрса пурнăçлатпăр.

Юр кайса пĕтсенех ыраш тата кĕрхи тулă калчисене минераллă удобренисемпе апат патăмăр. Кĕрхи тырăсем вăйлă ӳсеç.

Суртрисем те лайăх çитĕнеççĕ. Тулла тата ытти культурăсене эпир кĕрхи çĕртме тунă, удобренисемпе çемçетнĕ участоксем çине акса хăварнă. Акиччен тăпрана культиваци тунă. Тулла мĕншĕн лаптăк çинче хĕреслĕ майпа, кашни гектар пуçне 2,2-шер центнер вăрлăх акнă, 2,2-шер центнер пĕрчĕлетнĕ суперфосфат сапнă. Калча шăтса тухсан 1,5 центнер сульфат аммони, 0,5 центнер хлорлă кали сапса панă.

Тулă участокĕнче пĕр çумкурăкĕ те çук. Уй-хир бригадисем тырăсем çинче çумкурăксем ан пулччăр тесе хытă тăрăшаççĕ. Уйрăмах 62 çулхи колхозник В. Федоров юлташ ертсе пыракан 2-мĕш бригада лайăх ĕçлет. Эпир тулла кăна мар, ытти культурăсене те апат панă. 60,2 гектар [illegible] гектар [illegible] тырра, 5 гектар кантăр çине кашни гектар пуçне пĕрер центнер сульфат аммони, пĕрчĕлетнĕ суперфосфат, 0,5-шер центнер хлорлă кали сапса апат патăмăр.

Пирĕн çĕрсем вăйлă тăпраллă. Çавăнпа та ун валли минераллă удобренисем нумай кирлĕ. Эпир çак ĕç çине уйрăмах тимлĕ пăхатпăр.

Çĕрулмие кĕрхи çĕртме тунă участоксем çине лартса хăварнă. Тăпрана удобренисемпе лайăх çемçетнĕ. Çĕрулми шăтса тухсан кашни гектар пуçне 0,5 центнер хлорлă кали, 1,5 центнер пĕрчĕлетнĕ суперфосфат сапнă, участока лайăх сӳреленĕ. Июнĕн иккĕмĕш çурринчĕнче çĕрулмие малтанхи хут çумкурăксенчен тасатнă.

Пирĕн колхоз çĕрулмие вăрлăхлăх лартса ӳстерет. Халĕ бригадăсем лартнă çĕрулмипе сортласа çумлама хатĕрленеççĕ, мĕншĕн тесен пĕр участок çинчех темиçе сортлă çĕрулми шăтса тухма пултарать. Çĕрулми лайăх çитĕнет. Кăçал çуркунне кая юлса килчĕ пулин те эпир çĕрулми речĕсене пĕлтĕрхинчен 5—7 кун маларах купалама пултартăмăр.

Нумай çул ӳсекен курăксем кăçал 30 гектар акнă, иртнĕ çулта 28 гектар çине акнăччĕ. Вăрлăхлăх акнă 15 гектар çинчи курăка фосфорит тата хлорлă кали сапса апат панă, ун хыççăн лайăх сӳреленĕ. Вăрлăх участокне çумкурăксенчен тасатнă.

Виççĕмĕш çул ĕнтĕ клевера, тимофеевкăна тата люцернăна хутăштарса акатпăр. 38 гектар çинчи нумай çул ӳсекен курăксене çулнă. Çулнă участоксем çине кĕрхи культурăсем акмалла, çак кунсенчех кунта çĕртме сухи туса пĕтереççĕ.

Сад пахчинче те хĕрӳллĕ ĕç пырать.

Çак кунсенче утă çулма тытăнтăмăр. Улăхсене сӳп-çапран тасатнă. 10 гектар çинчи курăка азот, фосфорит тата хлорлă кали сапса апат панă. Ку ĕçре пире Чăваш ялхуçалăх институчĕн ӳсентăран енĕпе ĕçлекен кафедри пулăшу пачĕ.

Кăçал колхозăн пурĕ 320 гектар çинчи ялхуçалăх культурисене пухса кĕртмелле. Колхозниксемпе колхозницăсен хастарлăхĕ пысăк. Вĕсем тырпул пухса кĕртме хатĕр.

П. Г. ГРИГОРЬЕВ,
Шупашкар районĕнчи «Красный флот» колхоз председателĕ.

И. А. ГАВРИЛОВ,
колхоз агрономĕ.



УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ (сулахайран сылтăмалла): Шупашкар районĕнчи «Красный флот» колхоз председателĕ П. Г. Григорьев, бригадир В. Д. Федоров тата агроном И. А. Гаврилов юлташсем ыраш пуссинче.

Г. ЗИНЬКОВ, фотоӳкерчĕкĕ.

Ăмăртăва организацилес пулать

ÇĔРПУ. Нĕрĕш ял Советĕнчи Хрущев ячĕпе тăракан колхоз хуçалăхĕ хăвăрттăн аталанни çинчен инçетри таврана мухтав сарăлнă ĕнтĕ. КПСС райкомĕпе райисполкомра та ку колхозăн ӳсĕмĕ, унăн председателĕн И. Васильев юлташăн лайăх опычĕ çинчен тараватпа калаçа параççĕ, кирлĕ пулсан, вĕсем пур тĕрлĕ цифрăсемпе те паллаштарма хатĕр. Малта пыракан колхоз тепĕр артельсенчен хăшĕнпе ăмăртса ĕçлет-ха?

Ку ыйту райкомпа райисполкомăн ответлă работникĕсемшĕн кĕтмен çĕртен тухса тăчĕ.

— Хăш колхозпа ăмăртаччĕ-ха вăл?— хыпăнса ыйтрĕ райкомăн ялхуçалăх пайĕн заведующийĕ Н. Данилов юлташ.

— Тӳррипех калатăп, пĕлместĕп,— йышăнчĕ райисполкомăн ялхуçалăхпа хатĕрлев управленийĕн начальникĕ И. Капитонов юлташ.

Райкомăн ялхуçалăх пайĕн инструкторне Я. Васильев юлташа шанса ыйту пачĕç. Ăна шанмалла та. Вăл Хрущев ячĕпе тăракан колхоз председателĕн тăван пиччĕшех пулать, унпа пĕр ялтах пурăнать. Я. Васильев юлташ, нумай шутласа тăмасăр, кĕскен çеç калаçĕ:

— Çитес канмалли кун киле кайăп та, ун чухне тĕрĕссипе пĕлсе килĕтĕп.

Районта малта пыракан колхоз хăш артельпе ăмăртса ĕçлеме договор тунине мĕншĕн никам та пĕлмест-ха? Данилов, Капитонов, Васильев юлташсем тӳррипе йышăнма хăюллăх çитереймерĕç. Хрущев ячĕпе тăракан колхозра çеç мар, ытти чылай колхозсенче те ун пек договорсем туман, халĕ те çук.

Кăçалхи март уйăхĕнче районти пур колхозсенче те Чкаловски районĕнчи колхозниксене ялхуçалăх специалисчĕсен чĕнĕвне сӳтсе яврĕç. Ку ĕçре пуçламăш парторганизацисемпе колхоз правленийĕсене пулăшма КПСС райкомĕ хăйĕн аппаратĕнчи работникĕсене тата партипе совет активĕнчи [illegible] коммунистсене [illegible] сене икĕ. социализмла ăмăртăва анлăн пуçарса яма кăтарту панă.

Социализмла ăмăртăва организацилесси вăл—пĕр уйрăм тапхăрта туса иртермелли административлă е кампанилле [illegible] мар. Парти социализмла ăмăртăва куллен те пысăк чăтăмлăхпа ертсе пыма, çак ĕçре кирек мĕнле формализма та пĕтерме вĕрентет. Çĕрпӳ районĕнче çакăн çинчен тăтăшах манаççĕ.

Хрущев ячĕпе тăракан колхозра кăçал социализмла ăмăртăва хутшăнасси çинчен сӳтсе явас ĕçе çапла туса ирттернĕ. Райисполком председателĕн заместителĕ В. Кузьмин юлташ правленине çитнĕ те, Чкаловски районĕнчи колхозниксемпе специалистсен чĕнĕвне пĕрлехи пухура сӳтсе явма тата çĕнĕрен обязательствăсем йышăнма сĕннĕ. Вара ку ыйтăва пĕрлехи пухура лартса васкавлăн сӳтсе явнă.

Колхозăн вăйĕсемпе резервĕсене тĕплĕн шутласа пăхма, ун пирки малтан вăйлă тырпул ăстисемпе тата ферма работникĕсемпе тĕплĕн сӳтсе явма пухура вăхăт та юлман. Вара вĕсем, Хрущев ячĕпе тăракан колхоза унăн хуçалăхне 1953 çулта аталантарас тĕлĕшпе райисполком ярса панă государство планне илнĕ те, ун çинчи цифрăсене пухура йышăннă решени çине çырса хунă. Ытти колхозсемпе ăмăртса ĕçлеме вĕсемпе договор тăвасси çинчен пухура В. Кузьмин юлташ тата колхоз руководителĕсем пĕр сăмах та хускатман.

Нĕрĕш ял Советĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхозра та ĕç çавнашкалах пулнă. Унта Чкаловски районĕнчи колхозниксемпе ялхуçалăх специалисчĕсен [illegible] васкавлăн сӳтсе явнă, райисполком [illegible] плана аса илнĕ те, ăна пурнăçлас тесе, ячĕшĕн решени йышăнса [illegible]

Хрущев ячĕпе тата Молотов ячĕпе тăракан колхоз правленийĕсен [illegible] хушши икĕ километр çеç. Пĕр [illegible] тĕнчи икĕ колхоз хушшинче социализмла ăмăрту договорĕ тăвасси çинчен [illegible] чухнĕ сăмах та хускатса илеççĕ [illegible] чах çак икĕ колхоз хушшинче, [illegible] договорĕ мар, нимĕнле çыхăну та [illegible]

Молотов ячĕпе тăракан колхоз [illegible] дателĕ Ф. Ильин тата пуçламăш [illegible] ганизаци секретарĕ Т. Никонорова [illegible] сем тĕрĕс мар шухăш тытнă. [illegible] шучĕпе хăйсем ертсе пыракан [illegible] организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнче [illegible] сăртарах, çавăнпа та кӳршĕллĕ [illegible] тĕревлĕ колхозпа ăмăртма пултар[illegible]

Пирвайхи йăнăш тата пысăкрах [illegible] патне çитерет. Ф. Ильинпа Т. Н[illegible] ва юлташсем, хăйсен вăйĕ çине [illegible] сăр, малта пыракан колхозăн ла[illegible] чĕсене вĕренме те шутламаççĕ.

— Ильин юлташ пирĕн пата [illegible] ярса пусмасть,—терĕ Хрущев ячĕпе тăракан колхозри пуçламăш парторганизаци секретарĕ.

Ильин юлташ хăйĕн кӳршисем [illegible] тăтăшах пырса çӳресен, Хрущев [illegible] тăракан колхоз правленийĕ, унăн [illegible] седателĕ И. Васильев юлташ ар[illegible] изводствине мĕнле майпа лайăх [illegible] цилеме, колхозниксен харпăр хăй [illegible] ресĕсене обществăлла интересп[illegible] çыхăнтарма, колхоза тĕрĕс çулпа [illegible] ма пĕлнипе тĕплĕнрех паллаш[illegible] рĕччĕ.

Социализмла ăмăртăвăн чи пысăк [illegible] рене вăл—малта пыракансен [illegible] не, опытне пурин патне те [illegible] тĕмĕшлĕ ăсе [illegible] лайăхлатмалла [illegible] Хрущев ячĕпе тăракан колхоз[illegible] йĕне пуçламăш парторганизаци [illegible] кайра тăракан Молотов ячĕпе [illegible] колхоза ăмăртăва чĕнмесĕр пы[illegible] тăваççĕ.

Колхоза ертсе пырас ĕçре 10 [illegible] се нумай опыт пухнă И. В[illegible] унăн юлташĕсем Молотов ячĕпе [illegible] колхозăн кăçал çеç суйланă пр[illegible] пе бригадирсене, ферма раб[illegible] сахал мар пулăшу пама пултар[illegible]

Районти чылай колхозсенче [illegible] ханине тăтăшах нитме пулать. [illegible]

— Эпир тепĕр колхозпа ăм[illegible] ме договор та çырса хутăмăр, [illegible] вĕçлĕ йĕркепе çирĕплетме ал[illegible] марĕ.

Социализмла ăмăрту вă[illegible] хутшăннисем пĕр-пĕрин ĕçне ку[illegible] се тăрсан, контроль пулсан, [illegible] менлĕхсене пĕтерме пулăшсан [illegible] тĕплевĕ патне çитме пултарать.

Колхозсем хушшинче со[illegible] ăмăртăва сарса пырасси çинче [illegible] йышăннă решенисем сахал м[illegible] райком çав решенисем хăйсен[illegible] пурнăçланса пырасси çине ни[illegible] нать.

Н. [illegible]
(Хам[illegible])

Техникăпа туллин усă курăр

Районти колхозсен хирĕнче вăйлă тырпул çитĕнет. Колхоз ĕçченесем тырпула лайăх пăхса ӳстерме тăрăшаççĕ. Калчасене апат параççĕ, çумкурăксенчен тасатаççĕ. Механизаторсем çĕрулмие ытти тымарçимĕçсен речĕсем хушшине çемçетсе тăраççĕ, çĕртме пуссине культиваторпа çемçетсе килес çулхи вăйлă тырпул никĕсне хываççĕ. Çав вăхăтрах тырпул пуçтарса кĕртмелли машинăсене те юсаса пĕтертĕмĕр.

Комбайнсене юсама эпир иртнĕ кĕрхи кунненех хатĕрлене пуçланă. Тырă вырса пĕтернĕ хыççăнах комбайнсене МТС килкартине илсе килсе тасатса хартнă. Тасатнă вăхăтра механиксем комбайнерсемпе пĕрле комбайнсен кашни пайне тĕрĕслесе тухнă, вĕсене юсама мĕн кирлине шута илнĕ. Ун хыççăн запаслă пайсене кӳрсе килмелли план тунă. Çав вăхăтрах кивĕ пайсене юсаса тепĕр хут усă курма юрăхлă тума тытăннă.

Иртнĕ çулти опыт пире комбайнсене узелсенче юсама кирлине кăтартса пачĕ. Çавăнпа эпир комбайнсене тракторсемпе пĕр вăхăтрах узелсенче юсама тытăнтăмăр. Комбайн юсама ятарласа уллă узел тунă. Узелсене ертсе пыма нумай çул хушши ĕçлесе опыт илнĕ, техникăна лайăх пĕлекен комбайнерсене лартнă. Юсав ĕçне комбайнерсем пурте хутшăннă. Çапла ĕçлесе эпир май уйăхĕнче мĕншĕн комбайнсене юсаса пĕтертĕмĕр.

[illegible]

412 гектар вырнă. М. Михайлов юлташ вара «С-4» комбайнпа 563 гектар, П. Шмагин юлташ кăкарса ĕçлемелли комбайнпа 328 гектар вырса пуçтарнă.

Кăçал комбайнерсем тата пысăкрах çитĕнӳ тăвассишĕн кĕрешеççĕ. Сăмахран, М. Михайлов юлташ «С-4» комбайнпа 500 гектар тырă, 100 гектар нумай çул ӳсекен курăк, П. Шмагин юлташ 400 гектар, А. Хораскин, А. Сергеев, А. Макаров юлташсем 300-шер гектар вырса пуçтарма сăмах панă. Çав вăхăтрах комбайнерсем горючи 10 процент перекетлеме, комбайнсене пăхса тăма каякан тăкака 20 процент чакарма обязательство илнĕ.

Халĕ пур комбайнсене те хăйсем ĕçлекен колхозсене илсе кайса лартнă. Çак кунсенчех молотилкăсемпе сортировкăсене те колхозсене илсе кайса пĕтеретпĕр.

Пур комбайнсем валли те комбайнерсемпе вĕсен помощникĕсем пур. Молотилкăпа ĕçлеме машиновецсем, тырпула виçсе тăма весовщиксем тупса çитернĕ тата вĕсене МТС-а пухса ятарласа семинарсем ирттернĕ.

Комбайнерсем колхозсенче пĕр кун те пушă лармаççĕ. Вĕсем колхозри руководительсемпе пĕрле комбайнпа вырмалли вырăнсене пăхса тухса йĕтна йышăнаççĕ тата çав участоксенче тумалли ĕçсене мĕнле пурнăçламалли тĕрĕслесе тăраççĕ. Комбайнерсем кăтартнă тăрăх колхозниксем тырпулсене çумкурăкĕнчен тасатаççĕ. Комбайна куçарса çӳремелли тата сапнă тырра турттарасси çинчен [illegible]. Колхозсем комбайн агрегачĕсене ĕçлеме [illegible] са параççĕ. Комбайнерсем агрегатра [illegible]

пулма уйăрнă çынсене пухса, комбайн патĕнче хăвăрт ĕçлемелли майсемпе паллаштараççĕ.

Иртнĕ çулсенче колхозсем комбайн пăрахса пыракан улăма вăхăтра пуçтарса пыраймарĕç. Савна пула улăм нумай сая кайрĕ. Улăма вăхăтра пуçтарса купаламанни хăмăл сухаламалли тата кĕрхи çĕртме тумалли плана пурнăçлама чăрмантарса тăчĕ. Кăçал эпир, ытти ĕçсене тунипе пĕрлех, пĕрлешсе пысăкланнă 4 колхоза улăм пуçтарма тата икĕ колхоза пуçтарнă улăма купаласа улăмури тума пулăшатпăр. Халĕ МТС мастерскойĕнче улăм пуçтарса купалама кирлĕ япаласене хатĕрлеме тытăннă ĕнтĕ. Улăма пуçтарса илнĕ хыççăнах 700 гектар çинчи хăмăла сухаласа паратпăр.

Колхозсен тырпулĕнчен чылай пайне комбайнпа вырса пуçтармалла. Апла пулсан та МТС тата колхозсен молотилкисемпе çапмалли те нумай пулать-ха. Анчах та ку таранччен колхозсем итемри ĕçе механизацилемен. Çавна пула авăн çапма çын нумай кирлĕ тата ĕç вăраха тăсăлать, тырпул нумай тăкаланса пĕтет. Кăçал 5 колхоза итем çинчи ĕçсене механизацилеме пулăшатпăр. Механизацилелнĕ итемсенче ĕç нумай хăвăртланать тата çăмăлланать. Кунсăр пуçне çĕрле электричество çутипе ĕçлемелле тăватпăр.

Иртнĕ çулсенче чылай колхозсем вăрлăх вăхăтра хатĕрлеймерĕç. Çавăнпа ăна хĕлле сортласа тасатма тивет. Кăçал вăрлăх хатĕрлес ĕçре колхозсене пысăк пулăшу пама тăрăшатпăр. Вăрлăх участокĕнчен пуçтарса илекен тырра сложнăй сортировкăсемпе, итемрех сортласа тасатса чечен кондицие лартса паратпăр. МТС тырпул тасатмалли пур машинăсене те [illegible]. Халĕ вĕсене колхозсене илсе каяççĕ.

[illegible] Пĕтĕр колхозсене утă çулма тата

силос хывас ĕçе вăраха тăсн[illegible] рă вырма вăхăтра тытăнайма[illegible] тырă вырма тухиччен уй-хир[illegible] чăрмантарма пултаракан мĕн[illegible] вĕçлеме тăрăшатпăр. Халĕ [illegible] 7 агрегат силос хывас, 5 а[illegible] çулас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Кунс[illegible] агрегатпа рĕтсем хушшине [illegible] Пур агрегатсене те хăш ĕçе [illegible] пĕтермеллине кăтартса план-[illegible] панă. МТС дирекцийĕпе пар[illegible] графика мĕнле пурнăçланине [illegible] нах тĕрĕслесе тăраççĕ. Колхоз[illegible] йĕсемпе çыхăнса чăрмавсене [illegible] се яма пулăшаççĕ.

Кунпа пĕрлех эпир кĕрхи т[illegible] тата тымарçимĕçсем вăларма [illegible] шинăсене халех юсаса пĕтерес[illegible] те пĕр минутлăха та манмас[illegible] машинăсенчен чылайăшне юса[illegible] ĕнтĕ.

Тырпул пуçтарса кĕртесси [illegible] лайăх хатĕрленисĕр пуçне [illegible] хастарлăхĕнчен те нумай кил[illegible] парторганизаци халĕ меха[illegible] хушшинчи ăмăртăва вăйлату[illegible] Пирĕн МТС-ра ăмăртăва хут[illegible] механизатор та çук. Вĕсем [illegible] çурхи тырăсене 20—25 [illegible] кĕртес шухăш-кăмăлпа пур[illegible] организаци чи лайăх комму[illegible] тор бригадинче агитаторсем [illegible] нă. Вĕсем механизаторсене [illegible] колхоз умĕнче тăракан задач[illegible] ăнлантараççĕ, хаçат-журна[illegible] раççĕ, боевой листоксем кăл[illegible]

Партипе правительство [illegible] не техника парса пулăшни[illegible] торсем хăйсен вăйĕпе [illegible] ра пур ĕçсене те вăхăтр[illegible] пахалăхпа тума май пур[illegible]

А. [illegible]
Вăрнар МТС[illegible]

Республикăри юрă праçникĕ



ХАЛĂХ ЮРЛАТЬ

1. Кун пек уяв халиччен пулман

...халăх, халăх...
...5-мĕшĕнче, ирхине ирех, Етĕр-... çинчи вăрманалла халăх куçма... Машинăсемпе те, çуран та вĕ-... ...ĕр халăх куçать.
...юрă праçникĕ. Авалхи Шупаш-... ...ĕнĕ уяв.
...çинчи аслă уçланкă тулсах пы-... ...халăх юхăмĕн вĕçĕ-хĕрри ...сем пурте капăр тум-... ...çÿлĕ çине аякран пăхсас-... ...теменле чечеклĕ аслă юхан ...курăнать. Вăл республика сто-... ...çăлкуçланса тухать те çаплах ...ать. Аçта унăн тепĕр вĕçĕ?.. ...хăвна тĕлĕнмелле ...пек туйăма тытăнатăн. Тĕлĕнмел-...сем, ĕмĕтсем вăранаççĕ.
...аслă çул. Вăл Шупашкартан ...çитет, унтан—Горький хулине, ...ав, пирĕн аслă Тăван çĕршы-... столици. Чĕрĕ юханшыв, халăх ...Мускава çитнех пынă пек...

...ать. Урăхла мĕнле пулăн-ха? Чăн ...ĕнтĕ, кашни совет çыннин кăмăл-... ...сем ялан аслă Мускава çыхăн-...ççĕ. Пирĕн çĕршывра, çавăн пекех ...тĕнчери мĕнпур çутă çулсем Мус-... ...туртăнаççĕ. Мускав—çĕнĕ тĕнче...

...çăра çулçăллă вăрман сулхăнĕн-... ...тахçанхи пĕлĕшĕмĕрпе Илла-... Макарович Макаровпа, тĕл пулат-... Вăл—Шăхасан районĕнчи «Çамрăк ...» колхоз çынни. Унăн аллинче ...сăрпа сăрланă чăматан евĕрлĕ ешĕк. ...Чăматанна хулара хăвармаллаччĕ, ...çĕклесе çÿреме йывăр пулать-... тетпĕр эпир.
...арион Макаровичăн кĕске кастарнă ...сухаллă сăн-питĕнче чеерех кулă ...илет.
...—тет вăл, ешĕкне сÿлерех ...—ку чăматана эпĕ нихçан та хă-... пултараймастăп. Вăл манăн—пи-... ...лăскер, Мускаври Пысăк театра ...курнă.
...сулхи колхозник мĕн каласшăн ...эпир çийĕнчех ăнланса илет-... Илларион Макарович — шăпăрçă. ...сулхи çуркунне халăх пултарулă-... ...мотрĕнче Макаров колхозник Пысăк ...сцени çине тухса шăпăр каланă. ...авалхи инструментпа калакан чăваш ...сене радиопа пĕтĕм çĕршыв илтнĕ.
...Чĕре хăпка мар-ха,—тет Илларион ...ович,—эпĕ хам ĕмĕрте пайтах ха-... ...курнă, анчах паянхи пек... Çу-ук, ...пек уяв халиччен пулман. Çакăн ...халăха шăпăр калаçа тĕлĕнтер-ха! ...ах чухламалла...
...Илларион Макаровичăн сывлăхĕ ...ытса пĕлетпĕр.
...Антрамастăп-ха,—тет вăл, куьба-... —Кăçал, авă, мĕн тери тырпул ...çитĕнет! Манăн пайтах капан ...а пулать.
...вăхăтра халăх çаплах вăрманалла ...куçать, куçать. Кун пеккине çак ...сĕм вăрман та курман.
...шухăша тавçăрса илнĕ пекех, ...Макарович ерипен сăмах ху-...
...Паян, çакăн пек хаваслă кун, кĕк-... ...илни аваха мар та,—тет ...ирĕ. Çак султа ...ĕ. Ура-... [illegible]

Çапла кĕтмен çĕртенех Етĕрне çулĕн паянхи кун-çулĕ унăн ĕнерхи кун-çулĕпе çыхăнать. Çак аслă çул çинчи паянхи аслă уявшăн чĕре татăх та хаваслăнрах тапма тытăнать.

Вăрман сулхăнĕнчи пĕр кĕтесре республикăри юрă праçникне хатĕрленсе ирттерме уйăрнă комисси ĕçлет. Юрă праçникĕн программине малтанах туса хатĕрленĕ-ха. Унта пурĕ 60 юрăпа ташă,—вунçĕ сехетлĕх концерт. Анчах комисси сĕтелĕ патне хор кружокĕсен руководителĕсем татти-сыпписĕр пырса тăраççĕ. Кашни коллективăн пысăк репертуар. Кашни руководитель мĕнле те пулин ытларах юрă кĕртме сĕнет. Сахал кĕртнĕшĕн кÿренекенсем те пур... Кашни коллектив хăйĕн пултарулăхне мĕнле те пулин туллинрех кăтартса парасшăн.

Вăхăт 12 сехет патнелле çывхарать. Пĕрлештернĕ пысăк хор ятарласа тунă çÿлĕ вырăна йĕркеленсе тăрать. Çак хорта юрлама районсенчен икĕ пин те тăватçĕр çын, Шупашкартан икĕ пин çын пухăннă. Пурĕ тăватă пин çын ытла! Пирĕн республикăра кун пек пысăк хор ĕмĕрте те пулман.

Хорта çынсен капăр тумĕсенче кашни районăн, кашни уйрăм коллективăн сăнсăпачĕ питĕ лайăх курăнса тăрать. Акă концерта тухмалли вырăс тумне тăхăннă Улатăр çыннисем, шурă кĕпе тăхăнса хĕрлĕ саппун çакнă Хĕрлĕ Чутай хĕрсем, авăш пек шурă тăхăннă Етĕрне енчи хĕрсем, шурă кĕпесем çине шурă чĕнтĕрсем тытнă Сĕнтĕр хĕрĕсем, урă-пирлĕ кĕрен тĕрĕллĕ Елчĕк хĕрĕсем... Катан пир те пурçăн, крепдешин та маркизет... Пăхытăн та çак пысăк хор çине, теменле илемлĕн чечекленекен пысăк пахча умĕнче тăнă пек туятăн.

Вуникĕ сехет çитесси вуникĕ минут юлсан, трибуна çине республикăри юрă праçникне хатĕрленсе ирттерес тĕлĕшпе уйăрнă комисси председателĕ М. М. Романова юлташ улăхать.

Вăл, праçнике пухăннă çынсене чăнах уяв ячĕпе саламласа, юрă праçникĕн политикăлла тата культурăлла пĕлтерĕшне палăртса, уяври ĕççыннисене малашнехи ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем тума ырă сунса, халăх пултарулăхне малалла аталантарса пыма чĕнсе, республикăри юрă праçникĕ уçăлнă тесе пĕлтерет.

Совет Союзĕн Гимнĕ янраса каять. Ăна оркестрпа пĕрле пĕрлештернĕ пысăк хор юрлать. Дирижерĕ—Сталин премийĕн лауреачĕ, композитор Ф. М. Лукин. Аслă уçланкăри нумай пин çынлă халăх шăп пулса тăрать. Гимн кĕвви хăватлăн янранă майĕн кăвак сăрпа сăрланă çÿлĕ шучă тăрăх Совет Союзĕн государство ялавĕ ерипен шуса хăпарать те вăрманти сулхăн çил çинче мăнаçлăн вăркăшма тытăнать. Вăрман хĕррипе лартса тухнă репродукторсенчен Гимн кĕвви мĕнпур вăрман тăрăх инçете-инçете кĕрлесе каять. Халĕ ĕнтĕ чаплă Гимна пĕрлештернĕ пысăк хор кăна мар, уяври мĕнпур халăх, унпа пĕрле пĕтĕм сĕм вăрман юрланă пек туйăнать.

Иккĕмĕш юрă—Ф. Лукин çырнă «Çамрăксен юрри». Хора халĕ ĕнтĕ Г. Лебедев композитор дирижер пулса ертсе пырать.

Тухрăм эпĕ Атăл хĕррине
Итлемешкĕн хумсен юррине,—

янăратать пĕрлештернĕ хор. Çак вăрмантан инçех те мар аслă Атăл сарăлса выртать. Пысăк хорăн сассинче чăн та эпир аслă Атăл хумĕсем лăпкăн та мăнаçлăн юрланине илтетпĕр. Тĕрĕссипе, çак халăх хорĕнче те тăван Атăл хăвачĕ палăрса тăрать.

Ÿснĕçемĕн ÿсет халăх хорĕн сасси.

Савăнса юрлатпăр халăхпа
Халăхра—никам çĕнми хăват.
Саламлатпăр ăшă кăмăлпа
Сарлака та аслă çĕршыва.
Ялкăшать, çисет
Телейлĕ, çутă кун.
Пурăнатпăр чи илемлĕ
Аслă çĕршывра.
Ÿс, çĕршыв, хăватлăн,
Пирĕн юрă янрахăр ялан!

Пирĕн Тăван çĕршыв çултан-çул хăватланса та пуянланса пырать. Çавăнпа чăваш халăхĕ, Совет Союзĕнчи мĕнпур халăхсемпе пĕрле, савăнать, хаваслăн юрлать.

Пĕрлештернĕ хор Тулликовăн «Эпир миршĕн!» юррине уйрăмах хавхаланса юрласа пачĕ. Ку юрăра совет халăхĕн шухăш-кăмăлĕ питĕнлĕн палăрса тăрать. Совет çыннисем пĕтĕм тĕнчери мире хăйсем паттăр ĕçпе хÿтĕлесе тăраççĕ, çĕнĕ вăрçă чĕртме пăхакансене хирĕçлен... тĕнчери мĕнпур ырă кăмăллă çынсемпе мир [illegible]

«Эпир миршĕн!» юрра юрланă чухне пĕрлештернĕ хора В. Ходяшев композитор дирижер пулса ертсе пычĕ. Çак юрăра пысăк хорăн вăй-хăвачĕпе йĕркелĕхĕ, вăл татах та йышлăрах пулма пултарни уйрăмах лайăх палăрчĕ.

2. Çултан-çул ÿсет юрă культури

Художествăллă пултарулăх коллективĕсенчен хальхи вăхăтра ăсталăх тĕлĕшпе профессионалла искусство коллективĕсенчен ыйтнă пекех ыйтаççĕ. Кунта нимĕнле «чакару» та, «касару» та çук. Чăнчăн ăсталăх, чăн-чăн культура,—акă мĕн ыйтать халăх!

Пĕтĕмĕшпе илсен, республикăри юрă праçникĕ пирĕн художествăллă пултарулăх коллективĕсен ăсталăхĕ ÿссине, юрă культури çултан-çул малалла аталанса пынине кăтартса пачĕ. Нумай коллективсем халĕ ĕнтĕ профессионалла коллективсемпе те ăмăртма пултараççĕ.

Пĕрлештернĕ пысăк хор хыççăн районсемпе хуласенчен килнĕ уйрăм коллективсем, уйрăм исполнительсем туха-туха юрлама, ташлама тытăнчĕç. Пурте тенĕ пекех ăста юрлаççĕ, хитрĕ ташлаççĕ. Çавăнпа кашнин юрри-ташшине уйрăммăн палăртса кăтартма та йывăр. Коллективсен шучĕ те çав тери пысăк.

Республикăри юрă праçникне районсенчен пурĕ 77 коллектив килнĕ. Вăл шутра пĕр Улатăр хулине районĕнчен кăна 9 коллектив, Çĕмĕрле, Сĕнтĕрвăрри, Муркаш районĕсенчен кашниннчен 5-шер коллектив килнĕ. Шупашкар хулинчи [illegible] коллективсемпе пĕрле шутласан, республикăри юрă праçникĕнче пурĕ 85 коллектив хутшăннă.

Чăн малтан Çĕмĕрле районĕнчен килнĕ коллективсем туха-туха юрларĕç, ташларĕç. Уйрăмах Çĕмĕрлери сĕтел-пукан комбиначĕн клубĕ çумĕнчи коллектив пысăк пултарулăх кăтартрĕ. Çак коллективăн хорĕ «Посылала меня мать» юрра уяври мĕнпур халăха хумхантармалла юрласа пачĕ. Юрă пуçлаканĕ Милютина юрă кĕввине чĕрери ăшă туйăмпа çĕклентерсе пырать, хор, унăн сасси çумне хутшăнса, юрра малалла хăватлантарса ярать. Хор сасси вăрман тăрăх инçетеинçете кайса лăпланать. Тепĕр площадка çине Çĕмĕрле каччисем—пĕр тăван Милютинсем тухаççĕ. Вĕсем чăваш халăх ташшине çăмăллăн та илемлĕн ташлаççĕ.

Çĕмĕрле коллективĕсем хыççăн Шупашкарти «Электрик» клубĕн икçĕр çынтан тăракан пысăк хорĕ тухать. Ку коллективра Елена Волкова питĕ хастаррăн та пултаруллăн ертсе пырать. Хор «От Волги до Дона» юрă юрлать. «Электрик» клубĕнчи вырăс юррин уйрăм ансамблĕ «Черемуха» ятлă вырăс юррине чăнниппех чĕре патне пымалла юрласа пачĕ. Ансамбле электроаппаратура заводĕнчи çамрăк рабочи Николай Иголкин ертсе пырать. Çавăн пекех Вера Ишенкца тата Наталия Довбань юрласа панă «Молодой вальс», Мария Енчикова юрласа панă «Ой, цветет кудрявая калина» юрăсем те итлекенсен кăмăлне кайрĕç.

«Электрик» клубĕ çумĕнче халăх музыка инструменчĕсен оркестрĕ ăнăçлă çитĕнсе пырать. Унăн руководителĕ—Александр Стихсов. Оркестр «Поезд» ятлă музыкăлла фантазие, «Полянка» ятлă вырăс халăх юррине шăрантарса пачĕ.

Пĕрин хыççăн тепри, çине-çинех улшăнса тăраççĕ коллективсемпе пĕччен юрлакансем, ташлакансем. Икĕ площадка çинче те чăн-чăн «хĕрÿллĕ пурнăç» пырать,—пĕр çĕрте—юрлаççĕ, тепĕр çĕрте—ташлаççĕ. Сăмах май, çакна та каласа хăвармалла. Икĕ площадка тунивăл аван-ха. Анчах икĕ площадки çинче те пĕр харăсах ташлани е юрлани курасансен куç-пуçне саплалантарать. Кашни çыннăннах пурне те курас килет-çке, пурне те итлес килет. Çитес çул çавна лайăхрах шута илмелле.

Акă пĕр площадкăра «Электрик» клубĕн оркестрĕ шăпланма ĕлкĕреймен, тепĕр площадкăна Вăрнар районĕнчи Калинин ячĕпе тăракан колхоз хорĕ тухать. Ку вăл—чапа тухнă коллектив, республикăри смотрсенче вăл темиçе хут та малти вырăнсене йышăннă. Ăна нумай çул ĕнтĕ шкулти пионерсен вожатăйĕ Мария Ластухина ертсе пырать. Вăл—хăех дирижер, хăех юрлать те, ташлать те. Шăпчăкăнни пек хитре унăн сасси, кайăк вĕçнĕ пек çăмăл ташши.

Ластухина ертсе пыракан коллектив чăваш хĕрĕсен ташшине илĕртÿллĕ ташласа пачĕ.

Уйччен те пулмарĕ площадкăна тутар хĕрĕ пек тумланнă Розалина Григорьева ваткăшса тухрĕ. Вăл — Вăрнар вăтам шкулĕнчи пионервожатăй. Пĕр шавсăр, хушăран шыв юхнă пек, хушăран çавраçил пек юхса—çаврăнса пырать унăн ташши. Уяври халăх ăна хаваслăн алă çупса саламлать.

Акă ташламалли площадкăра Çĕрпÿ районĕнчи Кашарни колхозĕн коллективĕ тухрĕ. Ăна кăтте учительница Анастасия Герасимова ертсе пырать. Хорти хĕрарăмсем пурте Çĕрпÿ енчи пек тумланнă, шурă кĕпесем çийĕн кĕрен саппунсем çакнă. Хор чăваш халăхĕн туй юррине юрлать. Хорăн икĕ енче хушпу тăхăннă «туй инкисем» тăраççĕ. Кĕçех вĕсем туй ташшине пуçлаççĕ,—çăмăл та хастар ташă!

Эпир пурне те курса-итлесе те ĕлкĕрейместпĕр. Акă тепĕр площадкăра Канашри вагонсем юсакан заводăн клубĕ çумĕнчи коллектив тăрать. Пурте—чугун çул çинче ĕçлекенсен формисемпе. Маттур та хитре хĕрсемпе каччăсем! Коллектива Нина Федорова ертсе пырать. Вăл пĕлтĕр кăна-ха Шупашкарти музыка училищинчен вĕренсе тухнă. Ĕç опычĕ сахалтарах, анчах вăл ертсе пыракан коллектив «Марш советской молодежи», «Краснотал» юрăсене пултаруллăн юрласа пачĕ.

Кĕтмен çĕртен уçланкăри пĕтĕм халăх хумла тинĕс пек хускалса илет. Пурте ташламалли площадка еннелле пăхаççĕ. Сенçер пурçăн кĕпе тăхăннă пĕчĕкçеççĕ хĕрача площадка çийĕн лĕпĕш евĕр вĕçсе çÿрет. Лиза Леонтьева—Куславкка районĕнчи Туканаш шкулĕн 4-мĕш класĕнче вĕренекенскер. Вăл хăйĕн ачалла фантазийĕпе вырăс, Украина, Кавказри ту çыннисен ташшисене пĕтĕçтерне те тĕлĕнмелле хитре ташă ÿберчĕкĕсем туса кăтартать. Ку самантра çак пĕчĕкçĕ чăваш хĕрачине алă çине лартса, пĕтĕм тĕнче курмалла сÿлĕ-сÿле çĕклес килет.

—Акă, курăр пирĕн совет ачине, мĕн тери телейлĕ вăл, мĕн тери пултаруллă!—Çапла калас килет пĕтĕм тĕнчене илтĕнмелле.

Юрлакансемпе ташлакансенчен хăшнехăшне ытларах ырламалла-ши? Ырлама çăмăл мар пулсан, хурлама тата йывăртарах. Кунта чăн-чăн творчествăлла ăмăрту пырать, кашниех çĕри-теприччен малла тухма тăрăшать.

Уйрăм юрлакансенчен уяври çынсем Чкаловски районĕнчи учитель Вениамин Телюков, Красноармейски районĕнчи «Вотлан» колхоз членĕ Сидор Алексеев, Хĕрлĕ Чутай районĕнчи культура суртĕнчи хор кружок членĕ Нина Дорошенко юрланисене питĕ кăмăлласа итлерĕç.

Чăваш халăх юррисемпе вырăс халăх юррисем, хальхи вырăс композиторĕсемпе чăваш композиторĕсен юррисем, çавăн пекех халăх демократиллĕ çĕршывсенчи халăхсен юрри-ташшисем те пĕр пекех илемлĕн янăраççĕ. Тинĕсрен тинĕсе çитиччен вĕçĕ-хĕррисĕр сарăлса выртакан аслă Тăван çĕршыв çинчен, паттăр совет халăхĕ çинчен, Ленин—Сталин партийĕ çинчен, Совет Союзĕнчи халăхсен туслăхĕ çинчен, тĕнчери мире тĕреклетесси çинчен юрлаççĕ паян çак уява пухăннă çынсем.

Кашни коллектив тенĕ пекех хăйĕн юрри-ташшисемпе, ăсталăхпа культурăлăх ÿсинне çирĕплетсе парать.

Виçĕ çул каярах, Чăваш республики 30 çул тултарнă ятпа пулса иртнĕ олимпиадăра, Красноармейски районĕнчи культура сурчĕн коллективне художествăллă пултарулăх ĕçĕнчи пысăк ситменлĕхсемшĕн хытă ятланăччĕ. Паянхи юрă праçникĕнче Красноармейски çыннисен халăх умĕнче хĕрелмелле пулмарĕ. Районти культура сурчĕн директорĕ Н. Петров тата художествăллă руководителĕ Н. Григорьев тăрăшса ĕçленине вĕсен коллективĕ юрă праçникне лайăх хатĕрленсе кĕтсе илчĕ. Республикăри юрă праçникĕнче çак коллектив çынсене нумай тĕрлĕ хитре ташă-юрăсемпе савăнтарчĕ.

Коллектив хыççăн коллектив улшăнса пынă май, пĕр самантлăха уяври халăх шăпах пулчĕ. Юрламалли площадкăна хăйĕн ешĕкне йăтса, Илларион Макарович Макаров тухрĕ. Вăл, васкамасăр, шăпăрне ешĕкрен кăларать.

— Чăваш халăх, кĕввисем!—тесе пĕлтерет юрă праçникĕн программине тытса пыраканни.

Часах авалхи шăпăр сасси илтĕнсе каять. Малтанах кăшт хурлăхларах кĕвĕсем илтĕнеççĕ, вĕсем пирĕн халăхăн ĕлĕкхи асаплă пурнăçне аса илтереççĕ, анчах шăпăр пĕр икĕ хутчен çилĕллĕрех сасă кăлара-кăлара ярать те хаваслăн юрлама тытăнать. Çук, Илларион Макаровичăн шăпăрĕ макăрмасть паян, кивĕлле нăйкăшмасть. Вăл та пĕтĕм халăхпа пĕрлех савăнать. Çулăмлă ташă кĕвви янраса каять. Илларион Макарович шăпăрне хытă вĕрсе карăнтарать те сывлăшăлла ывăтать, шăпăр сывлăшра хăй тĕллĕнех юрлать. Уяв халăхĕ ырă кăмăллăн кулать.

— Маттур мучи!—тенĕ сасăсем илтĕнеççĕ халăх хушшинчен.

Шурă сухаллă мучи халăха пилĕк таран пуç тайать.

Çапла, ваттисем те, çамрăккисем те паян пĕр пекех савăнаççĕ, юрлаççĕ, ташлаççĕ.

Уяври çынсем Куславкка районĕнчи культура çурчĕн (руководителĕ А. Сергеев), республикăри çыхăну управленийĕн (руководителĕ Н. Степанов), Чăвашпотребсоюзăн (руководителĕ Л. Колбасова), Елчĕк районĕнчи Свердлов ячĕпе тăракан колхозăн (руководителĕ М. Воронцова), Хĕрлĕ Чутай районĕнчи культура çурчĕн (руководителĕ Н. Борщевская) тата ытти нумай коллективсем юрласа-ташласа панисене кăмăлласа кĕтсе илчĕç.

Халăх пултарулăхĕн тĕлĕнмелле концерчĕ тăватă сехет ытла пычĕ.

Юлашкинчен юрă площадкине Улатăр хулипе районĕн икçĕр çынтан тăракан пĕрлештернĕ хорĕ тухрĕ. Хора çамрăк дирижер, пĕлтĕр çеç музыка училищи пĕтернĕ Римма Лаптева ертсе пырать. Хорти çынсем, уйрăмах хĕрарăмсем, пурте пĕр пек тумланнă. Коллективра çирĕп йĕрке пурри, вăл юрă праçникне тĕплĕн хатĕрленни сисĕнет. Унăн программи те пуян. Ĕлĕкхипе хальхи вырăс халăх юррисем, классиксемпе совет композиторĕсен произведенийĕсем пĕрин хыççăн тепри улшăнса пыраççĕ.

Улатăрсен пĕрлештернĕ хорĕ чи малтанах В. Мураделин композиторăн «Партия наш рулевой» юррине юрласа пачĕ.

Пирĕн çĕршыври халăхсене ĕмĕрти пусмăртан ирĕке кăларса телейлĕ пурнăç туса панă Ленин—Сталин партине чысласа мухтакан юрă паянхи уявра уйрăмах хăватлăн янăрать. Парти—пирĕн сулпус, парти—пирĕн телей!—тесе калать кашни совет çынни çак юрра итленĕ май.

Пĕччен е иккĕн юрлакансенчен Молодовна Добрынина, Романьковна Чижова хăйсен пысăк пултарулăхĕсене кăтартрĕç.

Юрă праçникĕн программи вĕçленсе пынă тĕлелле çумăр пуçланчĕ. Лăпкă та ăшă çумăр, тырпулсене сĕтеклĕн тулса çитме пулăшакан çумăр. Çÿлĕ тÿперен сиксĕ вăрман тăррине çити çумăр шывĕн ярăнсем кĕмĕл хĕлĕхсем пек карăнчĕç. Кунĕпе юрă итленĕ пирки, çав кĕмĕл хĕлĕхсем, çапхах янраса тăрса, темĕнле çав тери ырă кĕвĕсем шăратса кăларнă пек туйăнаççĕ. Тен, чăнах та янăраççĕ пуль вĕсем, çав кĕмĕл хĕлĕхсем...

Баçхине çумăр чарăнчĕ. Хулари Крупская ячĕпе тăракан садра татах концерт пуçланчĕ. Кăнтăрла, юрă праçникĕнче, чылай коллективсем уйрăммăн юрлаймарĕç, юрлакансем те хăйсен пуян программисене пĕтĕмĕшпех кăтартаймарĕç. Садра вара çав коллективсем хăйсен пултарулăхне чылай туллин кăтартса пачĕç. Шăп çурçĕрччен янăраса тăчĕç юрăсем республика столици çийĕнче.

3. Уççăнрах янăрачăр пирĕн юрăсем

Уявсенче çитменлĕхсем çинчен каласас йăла çук, теççĕ. Анчах пирĕн çак паллăна пăсса хăшпĕр çитменлĕхсем пирки сăмах хускатма тивет.

Чылай районсенчен виç-тăватшар е пилĕк-ултшар коллектив килнĕ. Вĕсем кашни уйрăмшарăн туха-туха юрларĕç е ташларĕç. Тĕрĕссипе, вĕсене пĕрлештерсе пысăк хор коллективĕсем тума май пулнă. Сăмахран, Улатăр хулипе районĕ хăйсен тăхăр коллективне пĕрлештерсе пĕр пысăк хор тунă. Çакă вăл пĕччен е иккĕн тухса юрлакансене нимĕн чухлĕ те чăрмантармасть, пĕтĕм район коллективне вара вăй хушса парать.

Хор коллективĕсем чăваш халăх юррисене питĕ сахал юрлаççĕ. Çавăн пекех вĕсен репертуарĕнче чăваш композиторĕсен юррисем те çитеймĕсĕр. Малашне ку çитменлĕхе пĕтермелле. Репертуарта вырăс халăх юррисемпе, совет композиторĕсен произведенийĕсемпе пĕрлех, чăваш халăх юррисем те, чăваш композиторĕсен çĕнĕ произведенийĕсем те хăйĕн, сывăрçĕ вырăнне йышăнмалла.

Ăсталăх тĕлĕшпе пур коллективсем те пĕр пек çÿле ... [illegible]

Юрă праçникне хатĕрленнĕ май художествăлла пултарулăх ĕçĕ çĕнĕрен вăйлăн хускалса çĕкленчĕ, уйрăм коллективсем творчество ĕçĕнче пысăк çитĕнÿсем турĕç. Пирĕн çĕнĕ коллективсем чылай çуралчĕç. Çак çитĕнÿсене çирĕплетсе хăвармалла, халăх пултарулăхне малалла аталантарса пымалла.

Пирĕн халăх искусствăна юратать. Вăл хăйĕн талантне хăй искусство тăвать.

Килес çулхи юрă уявне эпир ĕçре те, халăх пултарулăхĕнче те тата чаплăрах çитĕнÿсем тунипе кĕтсе илĕпĕр.

Вĕçех уй-хирте тырпул пиçсе çитет. Пирĕн фабрикăсемпе заводсем иккĕмĕш çурçулăха кĕчĕç.

Юрă праçникĕнче хавхаланнă чĕресем пирĕн хастарран тапаççĕ. Хаваслă юрăсем юрра-юрра çĕнĕ ĕçе тытăнар, юлташсем!

Аркадий ЭСХЕЛЬ.

СТРАНИЦĂРИ ФОТОÇКЕРЧĔКСЕМ ÇИНЧЕ: [illegible]

Демократиллĕ Германи Республикинчи ĕççыннисем совет халăхне тав тăваççĕ

БЕРЛИН, июлĕн 5-мĕшĕ (ТАСС). Берлинри демократиллĕ хаçатсем Демократиллĕ Германи республикинчи ĕççыннисенчен тăванла пĕр шухăшлă пулнăшăн Совет Союзĕнчи рабочи класпа совет çыннисене тав туса çырнă çырусем çапăх нумай пичетлеççĕ.

Кальбе хулинчи тимĕр-тăмăр заводĕнче ĕçлекен рабочисем Киев металлургĕсем патне ответлесе янă çырура çапла калаççĕ: Берлинра тата Демократиллĕ Германи Республикинче пулса иртнĕ фашистла провокацисене хирĕçлесе Совет Союзĕнче пухусем иртнине вăл совет çыннисем нимĕç рабочи класне чĕререн шанса тăнине кăтартса панă. Заводри рабочисем хăйсен Киеври тусĕсене вĕсем июнĕн 17-мĕшĕнчи фашистла провокаци вăхăтĕнче хăйсен агрегачĕсене фашистла вă-пă-хурахсем тапăнасран 24 сехет хушши хÿтĕленĕ тăни çинчен пĕлтереççĕ. Совет Союзĕнчи рабочисем пиренпе пĕр шухăшлă пулни, тенĕ çырура, пиренпе совет халăхĕ хушшинчи туслăха тепĕр хут кăтартса пани пулса тăрать. Çак туслăх пире производствăра çĕнĕ çитĕнÿсем тăвассишĕн тата мире сыхласси хăварассишĕн кĕрешме вăй парать.

Совет Союзĕнчи рабочисене Демократиллĕ Германи Республикинчи рабочисемпе тăванла пĕр шухăшлă пулнăшăн Карл Марксштадт округĕнчи ĕççыннисем те тав тăваççĕ. Мускаври Сталин ячĕпе тăракан автозавод коллективне Ауэрбах хулинчи государствăн суту-илÿ «Хо» организацийĕн тĕп базинче ĕçлекенсем пысăк хавхаланупа саламлаççĕ.

Демократиллĕ Германи Республики халăхĕ хăйĕн правительствин ĕçĕсене ырлать

Лейпцигра пулса иртнĕ 150 пин çынлă митинг

БЕРЛИН, июлĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Германи Республикин халăхĕ Демократиллĕ Германи Республикин правительстви халăх пурнăçне лайăхлатас тĕлĕшпе туса ирттерекен çĕнĕ ĕçсене чĕререн ырласа йышăнать, фашистла провокаторсем çак ĕçсене пурнăçа кĕртессине пĕтерсе хума, нимĕç халăхĕ Демократиллĕ Германи Республикин правительствине, Германири Социалистсен пĕрлĕхлĕ партине шанса тăрассине пĕтерсе лартма тăнине татăклăн сивлет.

Ĕнер Лейпциг хулинче 150 пин çынлă митинг пулса иртнĕ. Вăл ĕççыннисем Германири социалистсен пĕрлĕхлĕ партийĕпе хăйĕн правительствине шанса тăнине кăтартакан хăватлă демонстраци пулса тăнă. Митингра пулнисем Берлинра тата Демократиллĕ Германи Республикинчи ытти хăшпĕр хуласенче провокаци тунă фашистсене сивленĕ.

Митингра йышăннă резолюцире пĕрлĕхшĕн, миршĕн, демократишĕн кĕрешес ĕçре нимĕç халăхĕпе пĕр шухăшлă пулнăшăн тата ăна пулăшнăшăн Совет Союзĕнчи рабочисемпе служащисене чĕререн тав туни çинчен каланă.

Бранденбургри трактор заводĕнче те пысăк митинг пулса иртнĕ.

Пухура тухса калакансем хăйсем Германири Социалистсен пĕрлĕхлĕ партийĕпе Демократиллĕ Германи Республикин правительствине чĕререн шанса тăнине палăртаççĕ. Ораторсем нимĕç халăхĕ хушшинче вăрçă кăларма пăхнă фашистла провокаторсем çинчен йĕрĕнсе каланă. Юлашкинчен пуху Сталинградри трактор заводĕнче ĕçлекен рабочисем патне çыру яма йышăннă.

Çавăн пек пухусем ĕнер Одер çинчи Франкфуртра, Берлинра тата ытти хуласенче те пулса иртнĕ.

Аденауэр депутат-коммунистсене парламентри никам тĕкĕнменлĕх прависĕр хăварма хăтланни путлансаларнă

БЕРЛИН, июлĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). АДН агентстви Бонран пĕлтернĕ тăрăх, Аденауэр депутат-коммунистсене парламентри никам тĕкĕнменлĕх прависĕр хăварма хăтланни путланса ларнă. Пĕтĕм Германире массăлла юхăм вăйланса пынипе бундестагри ваттисен совечĕ Германири Коммунистсен партийĕн фракцине кĕрекен депутатсене Макс Рейммана, Вальтер Фиша, Отто Нибергале, Гертруда Штробаха, Грета Тилене, Гуго Пауле, Оскар Мюллера, Фриц Ришене, Вилли Агаца тата Пауль Харига, парламентри никам тĕкĕнменлĕх прависĕр хăварасси çинчен бундестага ыйту тăратас тĕлĕшпе решени йышăнма хăйман.

Япони парламентĕнче

ЛОНДОН, июлĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Токиори корреспонденчĕ [illegible] тума чарасси çинчен правительство тăратнă закон проектне сÿтсе явмӑс[illegible]

бундестагри ваттисен совечĕ Германири Коммунистсен партийĕн фракцине кĕре- бундестага ыйту тăратас тĕлĕшпе решени йышăнма хăйман.

Япони парламентĕнче

ЛОНДОН, июлĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Токиори корреспонденчĕ çапла пĕлтернĕ: ĕнер Япони парламентĕнче либералла партин депутачĕ ĕçлев ыйтăвĕсем тăрăх законсем кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен комисси председательне тытса хĕненĕ. Комисси председателĕ, социалистла партин депутачĕ забастовкăсем тума чарасси çинчен правительство тăратнă закон проектне сÿтсе явмасăрах комисси ларăвне хупасси çинчен пĕлтернĕ.

Председатель ларăва хупасси çинчен пĕлтерсенех, либералла партин 25 депутачĕ председатель ларакан вырăна чупса пынă та, ăна хĕнеме пуçланă.

Японири ĕççыннисен забастовки

ПЕКИН, июлĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентстви çапла пĕлтерет: Токиоран килнĕ хыпар тăрăх, июлĕн 4-мĕшĕнче Японири 3 миллион рабочи забастовка пуçласа янă тата Иосида правительстви забастовкăсем тума чарасси çинчен закон проекчĕ хатĕрленине хирĕçлесе массăллă пухусем ирттернĕ.

Забастовкăна хутшăннă рабочисем Японири профсоюзсен генеральнăй советне кĕрекен 30 профсоюз членĕсем пулса тăраççĕ.

Студентсен пĕтĕм тĕнчери виççĕмĕш конгресĕ умĕн

ВАРШАВА, июлĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Августăн 27-мĕшĕнчен пуçласа сентябрĕн 3-мĕшне çитиччен Варшавăра Студентсен Пĕтĕм тĕнчери виççĕмĕш конгресĕ пулса иртет. Конгресăн тĕрлĕ çĕршывсенчи студентсен кунçулĕхи пурнăçĕ çинчен сÿтсе явмалла тата капитализмла çĕршывсенчи студентсем хăйсен пурнăçпа вĕренÿ условийĕсене лайăхлатассишĕн кĕрешнине пăхса тухмалла.

Польша халăх республикинчи студентсем конгреса 25 делегат тата сăнаса тăракансем 60 çын суйласа яраççĕ. Çĕршыври аслă шкулсенче Студентсен пĕтĕм тĕнчери виççĕмĕш конгресне кайма делегатсем тата сăнаса тăракансем суйланă.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНАЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, июлĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Республикин Халăх çарĕн Главнай командованийĕ июлĕн 4-мĕшĕнче çапла пĕлтернĕ: иртнĕ кун хушшинче Халăх çарĕсем Кахорирен кăнтăр енчи районта вырăнти пĕлтерĕшлĕ çапăçусем ирттернĕ.

Ĕнер çĕрле Америка самолечĕсем Кансо уездĕнчи Сохванли, Анак уездĕнчи Саманли çине тискеррĕн тапăннă. Мирлĕ халăх хушшинче вилнисем нумай, темиçе вуншар çурта ишĕлтернĕ.

Халăх çарĕн зенитнăй чăçĕсем тăшмана 2 самолетне персе ÿкернĕ, 3 самолетне сиенленĕ.

ПХЕНЬЯН, июлĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнай командованийĕ июлĕн 5-мĕшĕнче çапла пĕлтернĕ: иртнĕ кун хушшинче фронтра нимĕнле улшăнусем те пулман. Америка самолечĕсем ĕнер çĕрле каллех Пхеньян çине тапăннă.

Зенитнăй чăçсем паян тăшмана пĕр самолетне персе ÿкернĕ.

Америка авиацийĕ Корейăри мирлĕ хуласемпе ялсем çине çаплах тапăнать

ПХЕНЬЯН, июлĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Америка самолечĕсем Демократиллĕ Корея Халăх Республикинчи хуласемпе ялсем çине çаплах тапăнаççĕ. Корейăри тĕп телеграф агентстви пĕлтернĕ тăрăх, июнĕн 29-мĕшĕнче Америкăн 28 самолечĕ Çурçĕр Пхенан провинцийĕнчи Енчжу уездĕнчи ялсем çине тапăннă. Хресченсен çурчĕсемпе землянкисене ишĕлтернĕ. Вилнисемпе аманнисем пур.

Июнĕн 30-мĕшĕнче Америкăн йывăр бомбардировщикĕсем Кăнтăр Пхенан провинцийĕнчи Сунан уездĕнчи хресченсен çурчĕсем çине бомбăсем пăрахнă. 39 бомбардировщик Çурçĕр Пхенан провинцийĕнчи Кусон уездĕнчи ялсем çине хаяррăн тапăннă. Халăх хушшинче вилнисем пур. Çав кунхинех Америка самолечĕсем Кăнтăр Хамген провинцийĕнчи Камчжу уездĕнчи ялсем çине тата Хванхэ провинцийĕнчи Сариvонь хули çине тапăннă.

Июлĕн 1-мĕшĕ умĕнхи каç Америка бомбардировщикĕсен пысăк ушкăнĕ тепĕр хут Кăнтăр Хамген провинцийĕнчи Хамчжу уездĕнчи ялсем çине тапăннă. 200 яхăн землянкăсемпе ытти хуралтсене ишĕлтернĕ, ĕç выльăхĕпе ялхуçалăх инвентарĕсене нумай пĕтернĕ. Çав кунхинех Америка самолечĕсем Канвон провинцийĕнчи Пхчон уездĕнчи ялсем çине тапăннă.

Июлĕн 2-мĕшĕнче Америкăн «вĕçекен крепость» йышши йывăр бомбардировщикĕсем тата штурмовикĕсем Хванхэ провинцийĕнчи Альяу тата Хванчжу ялĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

Июлĕн 3-мĕшĕ умĕнхи каç йывăр бомбардировщиксем Кăнтăр Пхенан провинцийĕнчи Кансо уездĕнчи ялсем çине [illegible]

Июлĕн 2-мĕшĕнче Америкăн «вĕçекен крепость» йышши йывăр бомбардировщикĕсем тата штурмовиксем Хванхэ провинцийĕнчи Альяу тата Хванчжу ялĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

Июлĕн 3-мĕшĕ умĕнхи каç йывăр бомбардировщиксем Кăнтăр Пхенан провинцийĕнчи Кансо уездĕнчи ялсем çине
тапăннă. Июлĕн 5-мĕшĕ умĕнхи каç Пхеньян çине тискеррĕн тапăннă. Хулан хĕвелтухăç тата çурçĕр районĕсем çине 350 яхăн йывăр бомбăсем пăрахнă.

Гоминдановецсем Бирмăра

ЛОНДОН, июлĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ Рангунран пĕлтернĕ тăрăх, гоминданăн Бирмăри Ли Ми генералĕн вăрă-хурахĕсем çĕнĕ наступлени тума васкавлăн çĕнĕлле хĕçпăшалланаççĕ.

«Нью таймс оф Бирма» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, халĕхи вăхăтра Монг-Сатра аэродрома, Тайваньран килсе тăракан йывăр самолетсене йышăнма, аслăлатаççĕ.

БРАЗИЛИРЕ ХУТ ПĔЛМЕННИСЕМ НУМАЙ

МОНТЕВИДЕО, июлĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Халăх переписĕн наци служби пĕлтернĕ тăрăх, Бразили халăхĕ хушшинче хут пĕлмен çынсен йышĕ 51,5 процент шутланать.

Венгри халăх республикинчи çĕнĕ правительство

БУДАПЕШТ, июлĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Венгри Халăх Республикинчи Государство пухăвĕн сессийĕ пулнă. Венгри Халăх Республикин конституцийĕ улшăнусем кĕртесси çинчен депутат Ласло Ханапи сăмах тухса каланă. Вăл: Венгри Халăх Республикинчи экономикăпа культура аталанăвĕ государство тытăмĕнче улшăнусем тума хушать, тенĕ. Çак улшăнусем тăрăх пĕр йышши чылай министерствăсене пĕрлештереççĕ. Республикăра çавăн пек министерствăсем пулаççĕ: ют çĕршыв ĕçĕсен, шалти ĕçсен, оборона, финанс, юстици, металлургипе машиностроени, йывăр промышленность, çăмăл промышленность, шалти тулашри суту-илÿ, апат-çимĕç промышленноçĕн, хатĕрлев, çĕрĕçĕ, строительство, çыхăнупа транспорт, культура, сутĕç, сывлăх министерствисем.

Министрсен Советне—Министрсен Совечĕн председателĕ, унăн заместителĕсем, çавăн пекех план управленийĕн председателĕ кĕрессĕ.

Сесси верховнăй прокурор пулма Калман Цаконя уйăрса лартнă. Сесси Министрсен Советне суйланă. Министрсен Советне çаксем кĕнĕ: Имре Надь—председатель, Эрне Гере—председателĕн пĕрремĕш заместителĕ тата шалти ĕçсен министрĕ, Андраш Хегедюш—председателĕн пĕрремĕш заместителĕ тата çĕрĕç министрĕ, Янош Болдоцки—ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ, Иштван Бата—оборона министрĕ тата ыттисем те.

Правительство членĕсене суйланă хыççăн Венгри Халăх Республикинчи Министрсен Совечĕн председателĕ Имре Надь çĕнĕ правительствăн программи çинчен каласа панă.

Депутатсем çĕнĕ правительство программине пĕр шухăшлăн ырланă. Çакăнпа сесси хупăннă.

Монголипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх уйăхлăхĕ вĕçленнĕ

УЛАН-БАТОР, июлĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Паян каçхине Улан-Баторта Совет Союзĕпе культурăллă çыхăнусем тытакан Монголи обществин центральнăй совечĕн савăнăçлă ларăвĕ пулнă. Ларура Монголири Революциллĕ халăх партийĕпе правительство руководителĕсем, СССР, Китай, Корея, Польша дипломатиллĕ представителĕсем. Совет культури деятелĕсен делегацийĕ, Монголи Халăх Республикине хăнана пынă совет артисчĕсем, Польша ансамблĕн представителĕсем пулнă.

Уйăхлăх итогĕсем çинчен Совет Союзĕпе культурăллă çыхăнусем тытакан Монголи обществин центральнăй совечĕн председателĕ Б. Ширендыб доклад тунă.

Монголипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх уйăхлăхĕ, тенĕ докладчик, Монголипе Совет Союзĕнчи халăхсем хушшинчи туслăха малалла тĕреклетес, Совет Союзĕ коммунизм строительствинче тунă аслă çитĕнÿсемпе паллаштарса, Совет Союзĕн опытне вĕренес лозунгпа иртнĕ.

Лару хыççăн совет артисчĕсемпе Монголи артисчĕсем пысăк концерт кăтартнă.

Совет литератури Китайра

ПЕКИН, июлĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Юлашки тухнăранпа иртнĕ виçĕ çул çурă хушшинче Китай чĕлхипе: «Çамрăк гвардия», «Хурçă мĕнле хĕрнĕ», «Рядовой Александр Матросов», «Зойăпа Шура çинчен калакан повесть», «Кунсемпе каçсем», «Чăн-чăн çын çинчен калакан повесть», «Çĕр çинчи уттă», «Кăвак шинеллĕ виçĕ çын» ятлă кĕнекесене, Маяковский сăввисене тата ытти нумай произведенисене, çавăн пекех ытти çĕршывсенчи прогрессивлă писательсен нумай произведенийĕсене куçарса кăларнă. Вырăс классикĕсен произведенийĕсемпе совет литературин нумай произведенийĕсене тепĕр хут кăларнă. Вăл шутра: Лев Толстой, Достоевский, Короленко, Белинский, Чехов, Тургенев, Николай Островский, Шолохов тата ыттисем çырнă произведенисем кĕреççĕ.

Ĕççыннисен ÿссе пыракан ыйтăвĕсене тивĕçтерес шутпа пĕтĕм Китайри литературăпа искусство работникĕсен ассоциацийĕ уйăхра пĕрре тухакан «Куçарнă литература» («Ивэнь») кăларма тытăннă. Журналăн малтанхи номерĕнче Маяковскин «Сулахай марш», «Совет паспорчĕ çинчен калакан сăвăсем», «Блэк энд уайт» ятлă сăвви[illegible]. Борис Полевой калавĕсене, [illegible] «Юманпыз вылить» ятлă калавне. Чернышевский творчестви çинчен калакан статья, совет литературин [illegible] çинчен. Чехословаки писателĕ [illegible] калавне тата ытти материалсене пичетленĕ.

ПОЛЬШĂРИ СТРОИТЕЛЬСЕН ÇĔНĔ ÇИТĔНĔВĔ

ВАРШАВА, июлĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Польша Халăх Республикин ултă çуллăх планĕ тăрăх Варшавăпа Сталиногруд хушшинче электрификацилеккĕ чугун çул [illegible] Вăл Жирардуво [illegible] хулисене [illegible] Варшавăна Жирардув хушшинчи çула [illegible] каларах туса пĕтернĕ.

ПОЛЬШĂРИ СТРОИТЕЛЬСЕН ÇĔНĔ ÇИТĔНĔВĔ

ВАРШАВА, июлĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Польша Халăх Республикин ултă çуллăх планĕ тăрăх Варшавăпа Сталиногруд хушшинчи электрификациленĕ чугун çул тăвакан работниксем пысăк çĕнтерÿ тунă. Чугун çулăн çĕнĕ участокне туса пĕтернĕ. Ку участокăн тăршшĕ 23 километр. Вăл Жирардувпа Скерневице хулисене [illegible] Варшавăпа Жирардув хушшинчи çула унччен каларах туса пĕтернĕ.

Июлĕн 6-мĕшĕнчен тытăнса Варшавăпа Скерневице хушшинче электропоездсем йĕркеллĕ çÿреме тытăнаççĕ.

Совет баскетболисчĕсем Бельги командипе тĕл пулса вылянă

БРЮССЕЛЬ, июлĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Брюссельри спорт дворецĕнче совет баскетболисчĕсемпе Бельги команди хушшинче татăклă вăйă пулса иртнĕ. Çак вăйă пуласса спорта юратакансем нумайăшĕ пысăк интереспа кĕтнĕ.

Бельгиецсем хăйсен командине чи лайăх баскетболистсене кĕртнĕ. Бельги командинчи 12 çынран вуннăшĕ—кăçал Мускавра баскетбол енĕпе Европăра мала тухассишĕн пулнă ăмăртăва хутшăннă баскетболистсем. Çавăнпа та вăйă калтанах çивĕччĕн пуçланнă.

Совет баскетболисчĕсем вăйăра пысăк ăсталăх кăтартнă. Вĕсем 77 : 58 шутпа çĕнтернĕ.

БРЮССЕЛЬ, июлĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Остенде хулинче (Хĕвеланăç Фландри провинцийĕ), совет баскетболисчĕсем Бельгири иккĕмĕш командăпа тĕл пулса вылянă.

Вăйă совет баскетболисчĕсем 51 : 35 шутпа çĕнтернипе вĕçленнĕ.

СОВЕТ СОЮЗĔНЧИ ÇĂМĂЛ АТЛЕТСЕМ ГЕТЕБОРГРА

СТОКГОЛЬМ, июлĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Гетеборгра çăмăл атлетсен юлташла ăмăртăвĕ пулнă. Ăмăртăва Совет Союзĕнчи, Швецири, Норвегири, Данири спортсменсем хутшăннă. Вунă вăйăран саккăр вăйăра совет спортсменĕсем малти вырăна йышăннă.

Шупашкарти иппо[дромра]

Июлĕн 5-мĕшĕнче Шупашкарти [иппо]дромра лашасен чупакан лаша[сен] мĕш ăмăртăвĕ пулчĕ. Ăмăрт[ăва] хутшăнчĕ. Чупмалли [дистан]ци 2.400 метр.

1951 çулта çуралнă лашасен[...]не районĕнчи Буденный ячĕпе [...] колхозри «Соперник» ятлă [...] метра 3 минут та 3 секундра [...]рĕ. Чăвашсен государство ла[ша] «Злак» ăйăр çав дистанцие 3 [...] секунд хушшинче вĕçлерĕ.

Государствăн лаша витинчи [...]на», Етĕрне районĕнчи Буденн[...] тăракан колхозри «Ойра» кĕсре[...]сем 1950 çулта çуралнă) Финиша чи малтан «Ойра» [...] Унăн вăхăчĕ—2 минут та [...] «Люцерна» кĕсре униран 3,8 се[...]ючĕ.

Çĕрпÿ районĕнчи «Новая ж[изнь]» колхозри «Донец» ăйăрпа госуд[арство ла]ша витинчи «Запев» ятлă ăй[ăр ...] çулта çуралнăскерсем, ăмăртса[...] ипподрома пынисен хытă [...] пăхрĕç. Финиша чи малтан, 2 [...] 42,6 секунд вăхăт кăтартса, [...] ăйăр çитрĕ. «Донец» ăйăран [...] минут та 43 секунд.

1948 çулта çуралнă лашасен[...]не районĕнчи Буденный ячĕп[е ...] колхозри «Бирюза» ятлă кĕс[ре ...] метра 2 минут та 28 секундра [...]са пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ.

Государствăн лаша витинчи [...] кĕсре, 1949 çулта çуралнăскер[...]хи ăмăртура чи лайăх резу[льтат кăта]ртрĕ. Унăн вăхăчĕ—2 мин[ут ...] секунд.

Шăмăршă районĕнчи Ленин [...]ракан колхозри «Жребий» ăйă[р ...] йăх вăхăт кăтартассишĕн [...] 1.600 метрлă дистанцие вăл [...] 26-секундра чупса тухрĕ.

Етĕрне районĕнчи Тимиря[зев ячĕпе] тăракан колхозри «Забавных» [...] Çĕрпÿ районĕнчи «Авангард» [...] «Дивный клан» ăйăра 2.400 м[етр]са чуптăрчĕç. Финиша чи мал[тан «Див]ный клан» çитрĕ. Унăн вăхăчĕ [...] та 2,2 секунд.

Çитес ăмăрту июлĕн 12-мĕш[...]лать.

А. Ж[...]

„Молния“ спор[т] обществи стадион[ĕнче]

Иртнĕ вырсарникун арçын [...]рăм командисен баскетбол енĕ[пе ...] ликăра мала тухассишĕн пыр[...]тăвĕ вĕçленчĕ. Ăмăртăва Шу[пашкарти] «Динамо», «Спартак», «Молни[я», ...]кра» тата «Медик» спорт [обществисем], Улатăр, Канаш, Çĕмĕрле тата [...]ри хулисен баскетбол команд[исем хутшă]нчĕç.

Шупашкарти «Динамо» спор[т обще]ствин арçынсен команди 8 вă[йă]рӑнче те выляса илсе, пĕрремĕ[ш вырăн] йышăнчĕ. «Динамо» спорт [обществин] баскетбол команди ултти[мĕш] [...]

[...]кра» тата «Медик» спорт [...] Улатăр, Канаш, Çĕмĕрле тата [...]ри хулисен баскетбол команд[исем] [хутшă]нчĕç.

Шупашкарти «Динамо» спор[т обще]ствин арçынсен команди 8 вă[йă]ранче те выляса илсе, пĕрремĕ[ш вырăн] йышăнчĕ. «Динамо» спорт [обществин]
баскетбол команди ултти мĕш республика чемпионĕ ятне тата призна пĕрремĕш степень [диплом]не тивĕçлĕ пулчĕ. Çавăн пекех спортсменсене те пĕрремĕш сте[пень дип]ломсем пачĕç.

«Спартак» спорт обществин командин иккĕмĕш вырăн йыш[ăнса иккĕ]мĕш степень диплом, Улатăр ху[ла]хи виççĕмĕш вырăн йышăнса [...] степень диплом илчĕç. Çак ком[андăсен] баскетболистсем иккĕмĕшпе [...] степень дипломсем илме тивĕçлĕ.

Хĕрарăм командисем хушшин[чи] ăмăртура «Искра» спорт [обществин] баскетбол команди пĕрремĕш вы[рăн] йышăнса, республика чемпионĕ ят[не] çапла вара хисеплĕ приз тата [пĕрремĕш] степень диплом илме тивĕçлĕ.

* * *

Каçхине, 7 сехетре, «Молни[я»] обществин стадионĕнче футбол [енĕпе] РСФСР кубокне илессишĕн ăмăрту пулчĕ. Кăçал футбол[па] республика кубокне выляса ил[нĕ Шу]пашкарти «Спартак» спорт [обществин] футбол команди Ижевск хули[нчи (Уд]мурт АССР-ĕ) «Динамо» спорт [обществин] футбол командипе тĕл пулса [вылярĕ]. Вăйă 6 : 0 шутпа, хăнасем [çĕнтернипе] вĕçленчĕ. Çапла вара, Шу[пашкарти] «Спартак» спорт обществин команди футбол вăййипе РСФСР кубокне илессишĕн пыракан ăмăртура[н] ÿкрĕ.

Хаваслă кун

Канашалла кайкан шоссепе эсир Комсомольскран тухатăр та, çемçе кашма тăрăх утнă пек, кĕççелесе ешĕрекен çерем тăрăх колхоз утарĕ еннелле утатăр. Юмахри пек илемлĕ вырăн. Сулахай енче, ирхи хĕвел шевлисемпе выляса, Кĕтне йăлтăртатса юхать, сылтăм енче—вăрман. Çак çеремлĕхре, сутçанталлăкăн пархатарлă ытамĕнче, юрă праçникĕ пуçланмалла.

Хĕвел çамрăк хыр пĕвĕ сÿллĕш кăна çĕкленнĕ-ха. Йĕри-тавра пăхатăн та, халăх пĕлĕт пек çĕкленсе килнине куратăн. Килнĕ: пĕтĕм Комсомольск районĕ хускалнă. Умран автомашинăсем, мотоциклистсем, велосипедистсем, юланутçăсем иртеççĕ. Аяран-аяла тытăннă колхоз каччисемпе хĕрĕсем шăкăлтатса пыраççĕ. Ваттисем те, ачасем те—пурте уяв пулмалли вырăн енне утаççĕ. Килекен çынсем хушшинче эпир Чкаловски, Вăчĕк, Первомайски, Йĕпреç районĕсенчи çынсене те куратпăр. Юрă праçникĕ—халăх уявĕ, халăх савăнăçĕ!

[illegible]

«Юрă пире ĕçлеме, кĕрешме пулăшать» тесе çырса хунă.

Вăхăт вуннĕр сехет тĕлнелле сывхарса килет. Лапсăркка йăмра айне вырнаçтарнă вăхăтлăх радиостудинчен Б. С. Бокарев учитель уява килнĕ халăха виçĕ чĕлхепе—вырăсла, чăвашла, тутарла—аркка умне пухăнма чĕнет. Пысăк радиорупорсенчи сасăсем таçтанах илтĕнеççĕ.

Ĕнтĕ 14 колхозран килнĕ 250 çынтан тăракан пĕрлештернĕ хор та хăй вырăнне йĕркеленсе тăрать, халăх та аркăпа трибуна умне пуханса çитет. Чăн малта ачасем, ватă çынсем вырнаçнă. Акă иккĕ ача йăтнă хĕрарăм иртсе пырать, пурте ăна çул параççĕ. Халăх вĕçĕ-хĕрри çук нумай пулсан та—хор та, трибуна та инçетренех лайăх курăнать.

Пĕтĕм çеремлĕх шăпланса çитет. Юрă уявне ирттерекен комисси председателĕ Ф. Коновалов юлташ райсовет исполкомĕн председателĕпе П. Осипов юлташа сăмах парать.

Исполком председателĕн сăмахне [illegible]

республикинчи Подберезенски районпа социализмла ăмăртăва хутшăнса, малти вырăна тухнă.

— Ан тив, пирĕн юрăсем хаваслăн та уççăн янраччăр,—тет Осипов юлташ.— Вĕсем пирĕн чун-чĕрене хускатчăр, шухăш-кăмăла çĕнеччĕр, малашне тата хастартарах пулма чĕнччĕр.

Пĕрлештернĕ хор (ăна Вутланти ачасен çуртĕнчи воспитательница А. Варфоломеева ертсе пырать) Совет Союзĕн Гимнне юрласа ярать. Хаваслă сасă Кĕтне лапĕ тăрăх, вăрман тăрăх, уй-хирсем тăрăх янраса каять. Юрă хыççăн юрă кĕрлет. Уяв хĕрсе пырать. Вăрман хĕррине пăхатпăр. Кунта ик-виçĕ кун хушшинчех пĕчĕк хула пулса ларнă. Акă суту-илÿ организацийĕсен йышлă палаткисемпе киоскисем тăсăлаççĕ. Мĕн кăна çук вĕсенче!—пусма-таварĕ, апат-çимĕçĕ... Уйрăм колхозсем столовăйсем уçнă. «Алга» колхозпа «Заветы Ильича» колхозăн услăнкăри кухнисенчен раснах тутлă шăршă сарăлать. Уяв çыннисем кунта лайăх кăна апат яшки, çăмарта хăпартни, çÿлĕ те кăпăш тулă кулачи илме пултараççĕ.

Ачасем — вĕсем хушшинче хĕрсемпе каччăсем те пур—карусельпе мороженăй сутакансене сырса илнĕ. Саврăнать карусель [illegible] [illegible] кăрупачăсĕ—савăнать [illegible] пĕртен.

Уяв комиссийĕ пурне те шута илнĕ: шăп-шурă палаткăна медпункт вырнаçнă (васкавлă пулăшу кирлĕ пулма пултарать). А. Созина врач пире, йăл-йăл кулса, пурте йĕркеллĕ, нимĕн те пулман, тесе пĕлтерет.

Инçех те мар вутнĕ пĕр ут пуçне ухса тăрать. Лавĕ çинче хăйсен хатĕрĕсемпе пожарниксем лараççĕ (хыр вăрманĕ юнашарах). Дружина начальникĕ И. Самарин пире, врач пекех, пурте йĕркеллĕ, нимĕн те пулман, тесе пĕлтерет.

Уяв çыннисем пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçса тăраççĕ. Хăшне велосипедистсемпе мотоциклистсен ăмăртăвĕ туртать, теприсем тăвăл пек пыракан лашасем юртнине курасшăн, виççĕмĕшсем физкультурниксем чупнă çĕрелле васкаççĕ.

Пĕр çĕрте «Автан вăййи» пырать: куçса çине утланнă кĕкĕтсем улăм тултарнă михĕсемпе пĕр-пĕрне тÿнккеççĕ, кам ÿкмест, çавă çĕнтеребенни пулать. Вăрманти ĕшнере колхозсенчи хорсем халăх юррисене шăрантараççĕ. Тепĕр ушкăнта сăвăççене юратакан Л. Таллеров Уйăп Миншин «Ĕмĕрсен ĕмĕчĕ» ятлă сăввине хĕрсе кайса вулать.

Уяв çыннисем уйрăммăнах кĕрешекенсем патĕнче нумай. «Алга» колхоз членĕсем [illegible] сен паттăрлăхне кăтартаççĕ. Судьясем, халатăн авалхи йăлине кĕрешенсен иккĕмĕшне тĕрлĕлĕ бурган сыпаççĕ. Паттăра хирĕç паттăр тухать. Вĕсенчен пĕри, чылай кĕрешнĕ хыççăн, тепĕрне çăмăллăн кăна хул çине саврăнса хурать. Çапла пĕр вĕçĕмрен. Çĕнтерекенĕсем чĕрĕ çăмарта витри умне лараççĕ. Пурĕ 27 кĕрешекен хутшăнать. Сулкисем район паттăрĕн ятне Сахаров комбайнера пама йышăнаççĕ. Иккĕмĕш вырăна Пырвин тракторист, виççĕмĕш вырăна Вахипов колхозник тивĕçлĕ пулаççĕ.

Юрă праçникĕ хĕвел каçалана сулăничченех пырать. Вăйă, кулă, ташă, юрă... Савăнать халăх, хĕпĕртет халăх!

Эпир 72 çулхи колхознике—Михаил Андреевич Каткина тĕл пулатпăр. Уява вăл хăй пекех ватă арăмĕпе килнĕ. Çук, вĕсене ватă теме юрамасть-ха, вĕсен пĕвĕ-сийĕпе сăн-сăпачĕнче хастарлăх та пур-ха, куçĕсенче те пурнăç хăвачĕ çунать-ха. Вĕсем йышлă ача-пăча пăхса çитĕнтернĕ. Пĕри майор, тепри учительница, виççĕмĕшĕ врач, тăваттăмĕшĕ шкул директорĕ...

— Тавтапуç Совет влаçне—ачасемшĕн те, хамăршăн та,—тет старик.

Ватă колхозник хăйĕн хитрелетмесĕр каланă çак сăмахĕсемпе хăй шухăш-кăмăлне çеç мар, уява пухăннă 6—7 пин çын туйăмне çеç мар, пĕтĕм халăхăн чунчĕрине уçса пачĕ.

Эпир унăн куштанкăлă алăне хыттăн-хыттăн чăмăртарăмăр.

Стихван ШАВЛЫ.

ПАЯН «СОВЕТСКАЯ ЧУВА[ШИЯ»] ХАÇАТРА

Умстатья:—Совет служащийĕ[...] Республикăри юрă праçникĕ. Маркс — Энгельс — Ленин [...] вĕрентĕвĕ—пирĕн партин идей[...]лă хĕçпăшалĕ («Правда», кăç[алхи ...] 4-мĕшĕ).

Чăваш АССР Верховнăй Со[вечĕн пре]диумĕнче.

Тăванла виçĕ республика [...] мала тухасси—Чăваш республи[кинчи ял] хуçалăх работникĕсен чыслă ти[вĕçĕ]. Вырăнти тата урăх çĕршывсен хыпарсем.

Редактор заместителĕ М. Н. [...]

ТЕАТР

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТ[РĔ] Кизел хулинчи драма театрĕн [...] Июлĕн 7-мĕшĕнче «Олеся» (4 [...]ма). Спектакль 20 сехет те 30 м[инутра пуç]ланать.

КИНО

«РОДИНА»—июлĕн 7-мĕшĕнч[е] 14 сехетре пуçланакан сеансс[ем] «[...]ине казаки», ытти сеанссенче «[...] универмаге». Сеанссем 16 с[ехет]те 15 минутра, 20 тата [...] пуçланаççĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. [illegible], 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—3-98, яваплă секретарь—4-26, секретариат—5-59, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—15-37, [illegible] пайĕ—8-64, [illegible] пайĕ—5-61, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусем пайĕ—7-02, [illegible]—6-23.